Пирен ҫĕршывра империалистсен власне сирпĕтсе антарнă тата пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинче мир тăвасси ҫинчен пĕлтернĕ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 ҫул тултарни сывă пултăр!

24-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 НОЯБРЬ 7 ЭРНЕКУН 263 (5978) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

ОКТЯБРЬТИ РЕВОЛЮЦИН АСЛĂ ҪĔНТЕРĔВĔСЕНЕ ХŬТĔЛЕСЕ ХĂВАРАТПĂР

Иртнĕ ҫулсенче аслă Октябрь уявне тухнă халăхсен хаваслă юррисем янăранă ҫĕршывра паян тупăсем кĕрлеҫҫĕ, снарядсемпе минăсем шартлатса ҫурăлаҫҫĕ, моторсем шавлаҫҫĕ. Уяв каҫĕсенче илемленсе ялкăшакан хуласем тăшмана хирĕҫ хаяр ҫилĕ тытса тĕттĕмре лараҫҫĕ. Ҫурҫĕрти Пăрлă океанран пуҫласа Хура тинĕс патне ҫити тăсалакан фронтра отечественнăй аслă вăрҫă пырать.

Хăйсен ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн пирĕн ҫĕршыври халăхсем нумай ĕмĕрсем хушши юн тăкса ҫапăҫнă. Хамăрăн ирĕклĕхпе чыслăхшăн эпир 1917 ҫулхи октябрь кунĕсенче тăван ҫĕршывран помещиксемпе капиталистсен власне шăлса ывăтнă. Хамăрăн ирĕклĕхпе чыслăхшăн эпир граждан вăрҫи фрончĕсенче нумай тĕрлĕ интервентсене ҫапа-ҫапа аркатнă. Кĕрешӳ ҫăмăл пулман: Пирĕн ҫине пуҫ тӳпинчен пуҫласа ура тупанне ҫитиччен хĕҫпăталланнă тăшмансем тапăнса килнĕ. Ҫав тискер тăшмансене хирĕҫ эпир ҫара уран, ҫара алăпа тенĕ пек кĕрешĕве тухнă. Пирĕн ун чух тăшманăнни пек вăйлă хĕҫпăпал пулман, анчах пирĕн иксĕлми паттăрлăхпа сӳнми хастарлăх пулнă. Большевиксен партийĕ, аслă ҫулпуҫсем—полководецсем Ленинпа Сталин ертсе пынипе эпир ҫав кĕрешӳре ҫĕнтертĕмĕр, хамăр государствăн аслă чикки сене ҫирĕплетрĕмĕр.

Ывăр ҫапăҫусенче хамăрăн юна тăкни ахаль сая каймарĕ. Ирĕке тухнă ҫĕршыв ҫăмăллăн сывласа, хăватлăн ӳссе ҫеҫкленме тытăнчĕ. Нумай ҫулсем хушши пынă вăрҫа пула ишĕлнĕ хуҫалăха юсама эпир мĕнпур вăя хурса ĕҫлерĕмĕр.

Пирĕн ҫĕршыв умне малалла татах та хăватлăнрах аталанас ыйту тухса тăчĕ. Аслă ҫĕршыва хăватлă индустри, хăватлă ялхуҫалăхĕ кирлĕ. Халăхсен ҫулпуҫĕ Сталин юлташ ҫĕршыва индустриализацилемелли, ҫĕршыври ялхуҫалăхне коллективизацилемелли ăслă та аслă плансем туса пачĕ. Ҫав плансене никам ҫине шанмасăр камăрăн вăйпах пурнăҫа кĕртмелле пулчĕ. Эпир кашни пĕрчĕ тырра, кашни пĕр пуса перекетлесе пытăмăр. Асапсем те, йывăрлăхсем те сахал мар тӳссе иртертĕмĕр. Пирĕн аслă ĕҫе пайтах тăшмансем сăтăрлама пăхрĕҫ. Эпир вĕсене хаярран ҫапа-ҫапа аркатрăмăр. Эпир ҫителĕклĕ таран сывăрмасăр та канмасăр ĕҫлесе, тепĕр чухне ҫиес ҫăмăра сименсĕр перекетлесе, хамăрăн обществăлла пуянлăха пухрăмăр.

Сталинла пятилетккăсен ҫулĕсем хушшинче пирĕн ҫĕршыв малта пыракан хăватлă индустриллĕ, тĕнчере ҫук вăйлă ялхуҫалăхлă держава пулса тăчĕ. Авалхи пушхирсенче фабрикăсемпе заводсем, хуласем ӳссе ҫитĕнчĕҫ. Хирти сухапуҫĕ выранне — хăватлă трактор, ҫурла выранне — комбайн йышăнчĕ. Аслă ҫĕр пире хăйĕн мĕнпур пуянлăхĕсене уҫса пачĕ — кăлар мĕн чухлĕ кирлĕ, ҫавăн чухлĕ кăмăк, тимĕр-тăмăр, нефть тата ытти пуянлăхсем!

Кучухнехи ăслă станок умĕнче ĕҫлеме, кучухнехи хăватлă техникăна ертсе пыма совет халăхĕ хăйĕн ывăлĕхĕрĕсенчен ҫĕнĕ техниксемпе инженерсем, ҫĕнĕ кадрсем пиншерĕн, ҫĕршер пиншерĕн пăхса ҫитĕнтерчĕ.

Эпир хамăрăн алăсемпе, хамăрăн вăйпа социализмăн ҫутă та телейлĕ ҫуртне туса пытăмăр. Сталинла Конституци пире ирĕклĕ те телейлĕ пурнăҫăн тулли прависене пачĕ. Ĕҫле, вĕрен, кан, татах та лайăхрах ĕҫле!

Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче пирĕн чăваш халăхĕ те, Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур халăхсем пекех, пĕртан правăллă, пĕр пек телейлĕ халăх пулса тăчĕ. Вăл, Октябрь революцийĕпе пĕрле ҫĕнĕрен ҫуралса тăнăскер, хура пӳртсенчен хăтăлса тухнăскер, хăйĕн хуҫалăхĕпе культурине тĕлĕнмелле чеҫеклентерсе ӳстерчĕ. Халĕ ĕнтĕ ăна трахомăран сукăр пулса ларас шăпа, пĕтсе ларас шăпа хăратса тăмасть. Чăваш халăхĕн ывăлĕ-хĕрĕсем фабрикăсемпе заводсенче ĕҫлеҫҫĕ, колхозсенче вăйлă тырпул тăваҫҫĕ, аслă шкулсенче вĕренеҫҫĕ, тăван ҫĕршыв чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн вăрҫă уйăхĕсенче тăшмана хирĕҫ ҫапăҫаҫҫĕ.

Ҫаксем вĕсем пурте — Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин тивлечĕсем. Ҫаксене пурне те эпир хамăр алăпа, хамăрăн тарпа юна юхтарса тунă. Ҫавсем пурте вĕсем пирĕншĕн ҫавтери хаклă та паха. Ҫавсем пурте — пирĕн ирĕклĕх, пирĕн чыслăх, пирĕн телей, пирĕн пурнăҫ.

Эпир ҫирĕм тăватă ҫул хушши ырми-канми ĕҫлесе тунă пуянлăхсене — пирĕн фабрикăсемпе заводсене, пирĕн колхозсемпе совхозсене, пирĕн хуласемпе ялсене, пирĕн паха ҫуртĕрсене халĕ, ав, Германи фашисчĕсем турtса ĭлеспĕҫ, саратса, ҫунтарса аркатса пĕтересшĕҫ.

Пирĕн тăван ҫĕршыв ҫине ултавлăн тапăнса кĕнĕ тискер те сĕмсĕр тăшман «эпир тар юхтарса ĕҫленĕ ҫĕрсене турtса илес, хамăр вăйпа ĕҫлесе тунă тырпула тата нефте турtса илес тĕллеве лартать. Вăл помещиксен власне каялла тавăрас, царизма каялла тавăрас, вырăссен, украинецсен, белоруссен, литовецсен, латышсен, эстонецсен, узбексен, тутарсен, молдавансен, грузинсен, армянсен, азербайджанецсен тата Совет Союзĕнчи ытти ирĕклĕ халăхсен нациллĕ культурипе нациллĕ государственноҫне пĕтерсе хурас тĕллеве лартать, вĕсене нимĕслетес, вĕсене нимĕҫ князĕсемпе баронĕсен чурисем туса хурас тĕллеве лартать. Ҫапла вара, ĕҫ Совет Государствин пурнăҫĕпе вилĕмĕ ҫинчен, ССР Союзĕнчи халăхсен пурнăҫĕпе вилĕмĕ ҫинчен, Совет Союзĕнчи халăхсем ирĕклĕн пурăнасси е вĕсем чуралăха кĕрсе ӳкесси ҫинчен тырать» (Сталин).

Тăван ҫĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăх пысăк. Ҫав хăрушлăха сирсе ярас тесе, Октябрь революцин аслă ҫĕнтерĕвĕсене хӳтĕлесе хăварас тесе, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Ҫарпа мухтавлă Тинĕс-Ҫар Флочĕ, пирĕн сталинла соколсемпе хастар танкистсем, артиллеристсемпе пехотинецсем, кавалеристсемпе моряксем фашистла тискер-кайăксен урнă кĕтĕвĕсене хирĕҫ хаярран тăрса ҫапăҫаҫҫĕ.

Ҫĕр чăмăрĕ халиччен курман ҫак вăрҫăра пирĕн хĕрлĕ богатырьсем тĕлĕнмелле геройлăх кăтартаҫҫĕ. Вĕсен хушшинче чăваш халăхĕн ывăлĕсем те сахал мар.

Пирĕн земляк Совет Союзĕн Геройĕ Вячеслав Винокуров, капитан-орденоносец И. П. Петров, Хĕрлĕ Ялав орденне илме тивĕҫлĕ пулнă П. Павлов юлташсем отечественнăй вăрҫă фронтĕнче паттăрран кĕрешеҫҫĕ. Пирĕн боецсем ҫапăҫура яланах тавҫăруллă та хăюллă. Фронтăн пĕр участокĕнче пирĕн пĕр батальона хирĕҫ нимĕҫсен икĕ батальонĕ тата 16 танк тапăнса пынă. Ҫак йывăр ҫапăҫура батальон командирĕ Морозов юлташ стройран тухнă. Батальона ертсе пыма чăваш ачи, иртнĕ ҫул кăна Ҫĕрпӳри фельдшерсен шкулĕнчен вĕренсе тухнăскер, военфельдшер П. Семенов хăй ҫине илнĕ. Вăл боецсене хăюллă атакăна ертсе кайса, хăйĕн батальонĕпе нимĕҫсен икĕ батальонне ҫĕмĕрсе тăкнă.

Ҫакăн пек геройсем вĕсем ҫĕршерĕн те пиншерĕн шутланаҫҫĕ. Вĕсем тăван халăхăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре хăйсен пурнăҫне те хĕрхенсе тăмаҫҫĕ. Вĕсен чĕринче пĕр ĕмĕт кăна: ирĕр тăшмана ҫапса аркатмалла, тăван ҫĕршыва фашистла чуралăха кĕрсе ӳкме памалла мар.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Ҫар тăшмана питех те пысăк сухатусем кӳрет. Оборонăн кашни пусăмĕ урлă тăшман хăй салтакĕсен виллисене купаласа пырса кăна каҫма пултарать. Миллионшар фашистсен пуҫĕсене совет тăхланĕ ҫĕр ҫумне пăталаса хучĕ. Анчах пĕтĕм Европăна ҫаратса хăй ҫине броня тăхăнса килнĕ тăшман малаллах хирĕнсе кĕме пăхать. Тăшман пирĕн ҫĕршыв чĕрине — Мускава, ҫĕршывăн ытти пысăк центрĕсене — Ленинграда, Донбаса, Ростова, Крыма хăратса тăрать.

Миллионсен юнне ĕҫсе урса кайнă тăшман нимĕнле ирĕрлĕх умĕнче те чарăнса тăмасть. Вăл ҫĕрле, пĕлĕтсем хушшипе вăрттăн вĕҫсе килсе, вăрҫă тĕлĕшĕнчен нимĕнле палла выран та йышăнса тăман хуласем ҫине, ĕҫ хыҫăн канакан мирлĕ халăх ҫине, сăпкара выртакан пĕчĕк ачасем ҫине бомбасем пăрахать, пулеметран перет. Ҫапла майпа вăл мирлĕ халăха хăратса ӳкерме, тылра паника тума пăхать.

Тăшман кирек мĕнле ирĕр ĕҫ туса хăтланнине те кĕтсе илсе ăна хирĕҫ тăма яланах хатĕр пулар. Йăвашчунлăха, тимĕрлĕхе тĕшпипех пĕтерер. Тăшман сывлăпран килсе тапăннинчен сыхланас тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те тăвар. Всевобуч отрячĕсенче ҫĕршер те пиншер ҫынсем вĕрентсе кăларса, Хĕрлĕ Ҫар валли ҫĕнĕ полксем, дивизисем парар.

Фронта пулăшмашкăн фабрикăсемпе заводсенче, колхозсенче ĕҫ тухăҫлăхне татах та ытларах ӳстерер. Фронта валли танксем, танксене хирĕҫ кĕрешмелли хĕҫпăпалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, снарядсем, минăсем, пулеметсем, винтовкăсем нумайрах парар! Продовольстви нумайрах парар!

«Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Ҫара, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Флота пулăшма хамăрăн пĕтĕм вăя хурар! Тăшмана ҫĕмĕрсе тăкма халăхăн пĕтĕм вăйĕсене хурар!» (Сталин).

Пирĕн аслă полководец, аслă ҫулпуҫ Сталин юлташ ертсе пынипе ҫак историллĕ ҫапăҫура Германи фашизмне ҫапса аркататпăр, Октябрь революцин аслă ҫĕнтерĕвĕсене хӳтлесе хăваратпăр.

г. Ячеистов художник ӳкерчĕкĕ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 5-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕҫ мĕнпур фронтсенче ҫапăҫусем туса пынă.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче нимĕҫсен 30 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕҫсен 27 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн авиачăсем тăшманăн 80 танкне, пехотăна вооружени тиесе пыракан 350 автомашинине, горючи тултарнă 15 цистернине, 13 полевой орудине, зенитнăй артиллерин 7 батарейине, ҫар снаряженийĕ тиенĕ 130 лавран тăракан обозне тата нимĕҫ пехотине пĕр полка ҫити пĕтерсе тăкса стройран кăларнă.

* * *

Хĕвеланăҫ фронтĕнче ҫапăҫакан Хĕрлĕ Ҫар чăҫĕсемпе пирĕн авиаци ноябрĕн 2—4-мĕшĕнче пулса иртнĕ ҫапăҫусенче П. районĕнче нимĕҫсен 97 танкне, пехотăна ҫар грузĕ турттарса пыракан 184 автомашинине, 18 орудине, горючи тултарнă 7 цистернине тата противник пехотине пĕр батальона ҫити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Совет партизанĕсем тăшмана чылаях пысăк сухатусем кӳреҫҫĕ, коммуникацисене пăсаҫҫĕ, ҫыхăнăва татаҫҫĕ, противникăн чĕрĕ вăйне, танкĕсене, автомашинисене тата боеприпасĕсене пĕтере-пĕтере тăкаҫҫĕ. Фашистсен хăйсен тылне ирĕкĕрех пысăк ҫар отрячĕсемпе сыхласа тăма тивет.

Пирĕн ҫаҫсен аллине Германин 11-мĕш ҫарĕн командующийĕ каларнă приказ лекнĕ, унта ҫапла каланă: «Партизансен групписем сыхăлăхпа тимлĕх вăйсăрланнă чухне—тул сутăлас умĕн ҫĕрле тапăнаҫҫĕ; вĕсем засадăсенчен кĕтмен ҫĕртен сиксе тухса ҫапăҫма пуҫлаҫҫĕ. Партизансем часовойсене штыксемпе чиксе тата хĕссемпе касса пĕтерсе тăкаҫҫĕ, засадăсем туса обозсене сыхласа тăраҫҫĕ, вĕсем сине кĕтмен ҫĕртен пеме пуҫлаҫҫĕ, самолетсем анса лармалли площадкăсен ҫывăхĕнче машинăсем вĕҫсе ҫĕкленнĕ е анса ларнă самантра самолетсем сине переҫҫĕ, артиллерине чарса лартас, кайран ун сине атакăлас тесе артиллери лашисем сине переҫҫĕ».

Тăшман ирĕксĕрех йышăнни фашистла захватчиксене хирĕҫ кĕрешес ĕҫре халăхăн партизанла движенийĕ мĕнле пысăк вăй пулса тăнине тепĕр хут уҫҫăн кăтартса парать.

* * *

Нимĕҫсем Италире сĕмĕррĕн хуҫалании халăхăн йышлă массисем Муссолини политикипе кăмăлсăрланнассине вăйлатать. Ҫавăн пек кăмăлсăрланни рабочисем тăвакан забастовкăсенче час-часах палăрать. Октябрĕн 28-мĕшĕнче Аости горнякĕсем жандармери ҫуртне ҫĕмĕрсе тăкнă, 8 жандарма вĕлернĕ тата «Тĕп пултăр вăрҫă!», «Нимĕҫсене Италирен хăваласа кăларар!» текен лозунгпа демонстраци организацинленĕ. Италири Бьелла тата Клузон хулисенче рабочисемпе жандармери хушшинче юнлă тытăҫусем пулса иртнĕ.

* * *

Совет халăхĕ Хĕрлĕ Ҫар валли хăватлă боевой резервсем хатĕрлет. Миллионшар рабочисем, колхозниксем, служащисем всевобучăн малтанхи уйăхне ăнăҫлăн вĕрлерĕҫ. Горький облаҫĕнчи нумайĕш районсенче вĕренекенсен хăйсен пуҫарулăхĕпе ҫар ĕҫне вĕренмелли занятисен сехетне ӳстернĕ. Ҫакна пула нумайĕш подразделенисем вĕренӳ программине срокчен вĕҫленĕ. Хальхи вăхăтра боецсем станковăй тата ручной пулеметсене вĕренеҫҫĕ, сывăхри ҫапăҫăвăн искусствине ăнăҫлăн вĕренсе алла илеҫҫĕ.

Совет Забайкалйинче хĕҫпăпал тытма пултаракан арҫынсем пурте ҫар ĕҫне вĕренеҫҫĕ тата юратнă тăван ҫĕршыва хӳтĕлеме вăйлăн хатĕрленеҫҫĕ. Хуласемпе ялсенче, рудниксенче тата ылттăн приискисенче учебнăй городоксем, полигонсем тунă. Читари паровозсем юсакан, Ворошилов ячĕпе тăракан заводра пурне те ҫар ĕҫне вĕрентесси пысăк ҫĕкленӳпе иртсе пырать. Мĕнпур боецсене учебнăй винтовкăсемпе гранатăсем тупса панă. Хальхи вăхăтра йĕлтĕрпе походсене кайма хатĕрленме тытăннă.

Приморьери ĕҫҫыннисем ҫар пĕлĕвĕсене ăнăҫлăн вĕрентсе алла илеҫҫĕ. Владивосток хулинчи Ленински районăн вĕренӳ отряднĕче боецсем винтовкăпа гранатăн материалнăй чаҫне лайăх вĕреннĕ тата ручнойпа станковăй пулеметсене ăнăҫлăн вĕрентсе пыраҫҫĕ.

Ноябрĕн 6-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 6-мĕш ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕҫ ҫапăҫнă.

* * *

Хĕвеланăҫ фронтĕнчи авиачăсем ноябрĕн 4-мĕшĕнче пĕр кун хушши ҫапăҫнă вăхăтра нимĕҫсен 48 танкне, противникăн пехотине боеприпасĕсене тиенĕ 200 автомашинине, ҫар грузĕ тиенĕ лавсене 100 лав таран, горючи тултарнă 5 цистернине, 15 орудине, зенитнăй 4 точкине, боеприпассем тиенĕ 4 вагонне пĕтерсе тăкнă, противникăн пехотине икĕ батальона ҫити аркатса янă тата пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче ҫапăҫакан Н-ски танковăй часть противника хирĕҫ кĕске вăхăт хушши ҫапăҫса, нимĕҫсен 6 танкне, противотанковăй 20 орудине, 4 полевой туппине, 6 автомашинине тата противникăн салтакĕсене 500 ҫынна ҫити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лобанов командирăн артиллери чăҫĕ ноябрĕн 1-мĕшĕнче противникăн пехотине тиенĕ автомашинисене 80 таран пĕтерсе тăкнă. Ҫав чăҫах ноябрĕн 2-мĕшĕнче тăшман пехотин икĕ батальонне аркатса янă тата пĕтерсе тăкнă тата нимĕҫсенчен темиҫе танк тытса илнĕ.

* * *

Австрин нумай районĕсенче хаяр выҫлăх пуҫланса кайнă. Хуласен урамĕсенче выҫăпа начарланса кайнă ҫынсен виллисене час-часах тупаҫҫĕ. Нумай вăхăт хушши тăраниччен ҫимесĕр пурăнни рабочисен ĕҫ тухăҫлăхĕнче ытла та хытă палăрать. Ҫапла Вена, Штоккерау, Лизинг тата Медлинг хулисенчи заводсенче юлашки икĕ уйăх хушшинче рабочисен ĕҫ тухăҫлăхĕ 15 процент чакнă. Ҫар заказĕсене пурнăҫа кĕртекен нумай предприятисенче ĕҫ тухăҫлăхĕ чакнă тата саботаж тунисем нумай пулнă пирки продукци туса каларасси 20—30 процент чакнă. Заводсенче ăнсăртран пулакан инкексинкексен хисепĕ хытă ӳссе кайнă. Нимĕҫсем Австрири предприятисенче продукци туса каларассине вăйлатма хăтланнинчен нимĕн те тухман.

* * *

Сарт-ту промышленноҫĕнчи рабочисем, инженерсем тата служащисем стахановла ĕҫленипе ҫĕршывăн оборона вăй-хăватне тĕреклетеҫҫĕ. Караганда облаҫĕнчи Успенски рудник пăхăр руди каларас тĕлĕшпе ҫулталăк планне тултарнă та ĕнтĕ. Нумай пулмасть Высокогорскри тимĕр-тăмăр рудникĕн (Нижний Тагил) коллективĕ хăйĕн ҫине обязательствăсем илсе, Уралри мĕнпур шахтерсене ҫĕн хăвартлăхĕсене виҫĕшер хут ӳстерме чĕннĕ. Высокогорскри горняксем хăйсен обязательствисене тăслăн пурнăҫа кĕртнĕ. Октябрĕн 28-мĕшĕнче рудник ҫулталăкри производство планне тултарнă. Бурщик-семиволосовец Южаков 8 уйăхри нормăна, бурщик Скородумов 21 уйăхри нормăна тултарнă та ĕнтĕ. Якут республикинче «Джугджурзолото» тресчĕн Минорски, Евкаджински тата ытти приискисем ҫавăн пекех ҫулталăк планĕсене тултарнă, халĕ вĕсем планран иртерсе ылттăн калараҫҫĕ. Юр приискăн 30 бригади ҫулталăкри программăна тултарнă. Ҫулталăкри программăна «Якутзолото» тресчĕн рядовой предприятийĕсемпе старательсен артелĕсем те пурнăҫа кĕртнĕ. Казах ССР Республикинчи «Акжал» рудникăн «Центральная» ятлă шахти ҫулталăк планне икĕ хут иртерсе тултарнă. Красноярск крайĕнче «Минусзолото» тресчĕн Артем ячĕпе тăракан рудникĕсенче 200 хĕрăм забойщик тата каталь ӳсĕсене туса пыма вĕренсе ҫитнĕ. Вĕсенчен кашниех нормăсене пĕрре ҫурă тата ытларах та тултарать. Бурган юлташ бригадир пулса ĕҫлекен старательсен артелĕ ылттăн тушăсене ĕнĕпе ҫулталăк планне 223 процент пурнăҫа кĕртнĕ.

МУСКАВА ХŬТĔЛЕКЕН ГЕРОЙСЕНЕ

ССР Союзĕн Наукăсен Академийĕ Мускава хӳтĕлекенсене саламлă ҫыру янă. Ҫак саламлă ҫырура ҫапла каланă:

— Октябрьти революци XXIV ҫул тултарнине эпир йывăр испытанисен обстановкинче, тăшмана хирĕҫ пыракан хаяр ҫапăҫу обстановкинче уявласа иртеретпĕр.

Тăшман Мускав сывăхĕнче. Нимĕҫсен фашистла захватчикĕсем ҫапăҫăва ҫĕнĕ те ҫĕнĕ вăйсем кĕртсе яраҫҫĕ. Малта пыракан этемлĕхĕн чĕри пулса тăракан хула хăрушлăхра.

Пирĕн ирĕке паттăрăн сыхласа, Хĕрлĕ Ҫар тата халăх ополченийĕ урса кайнă бандитсене каялла ывăтса ярĕҫ. Салам сире, Мускава хӳтĕлекен геройсене, тăванла салам ССР Союзĕн Наукăсен Академийĕнчен. Эпир сирĕнпе!

Совет ученăйĕсем Хĕрлĕ Ҫар рецĕсенче, рабочисен батальонĕсенче—алла винтовка тытса, институтсенче, лабораторисенче, заводсемпе политонсенче — наука хĕҫпăпалне алла илсе отечественнăй аслă вăрҫăра пирĕн ҫĕнтерĕве туптама пулăшаҫҫĕ. Ҫак хăрушă сехетре наукăпа техника работникĕсем пурте—алăсене канма памасăр татах та вăйлăрах ĕҫлемелле, тăшмана пĕтермĕ ҫĕнĕ хĕҫпăпаксемпе средствăсем тупса памалла, фронта кунран кун ытларах та ытларах танксем, орудисем, самолетсем, тупăсем, винтовкăсем, пулеметсем, снарядсем, взрыв тăвакан япаласем ямалла пултăр.

ССР Союзĕнчи Наукăсен Академийĕ хамăр ҫĕршывăн научнăй работникĕсене мĕнпур вăя, мĕнпур пĕлĕве тăшмана хирĕҫ кĕрешес ĕҫе пама чĕнет, Совет правительстви тавра, Ленин—Сталин партийĕ тавра, нимĕҫсен фашистла захватчикĕсене хирĕҫ пыракан кĕрешĕвĕн организаторĕ тавра татах та тачăрах пĕрлешме чĕнет.

Академиксем: В. Л. КОМАРОВ, О. Ю. ШМИДТ, Е. ЧУДАКОВ, А. Н. КОЛМОГОРОВ, А. Н. БАХ, П. И. СТЕПАНОВ, К. А. ОРБЕЛИ, В. П. НИКИТИН, А. М. ДЕБОРИН, Е. С. ВАРГА, И. И. МЕЩАНИНОВ, А. А. БОГОМОЛЕЦ, Т. Д. ЛЫСЕНКО, В. Н. ОБРАЗЦОВ, А. Е. ФЕРСМАН, С. И. ДАНИЛОВ, И. В. ГРЕБЕНЩИКОВ, Н. С. ДЕРЖАВИН, А. Ф. ИОФФЕ, П. Л. КАПИЦА, Н. Н. СЕМЕНОВ, С. Л. СОБОЛЕВ, А. Н. ФРУМКИН, С. А. ЧАПЛЫГИН.

(ТАСС).

Боецсене праздник валли кучченеҫсем

ТАШКЕНТ, ноябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Узбекистанăн пур енĕсенчен те кашни кунах фруктсем, пахча-ҫимĕҫсем, пыл, эрех тиенĕ составсем каяҫҫĕ. Ҫакă вăл—Хĕрлĕ Ҫар воинĕсем валли колхозниксем яракан кучченеҫсем. Андижанран 7 пин килограмм фруктсем, 2.500 килограмм арбузпа дыня, икĕ тонна рис, 1.300 килограмм пыл, темиҫе сорт иҫĕм ҫырли янă. Босарски облаҫĕнчи колхозниксем 18 вагон продукт янă. Ҫавăн пекех Самарканд, Наманган, Фергана тата ытти облаҫсенчи колхозниксем те боецсем патне нумай кучченеҫ янă. Праздник валли боецсем патне кучченеҫ пухса ярас ĕҫ халĕ те пырать.

Мускав ҫыннисем оборона фондне 86,7 миллион тенкĕ панă

Ноябрĕн 1-мĕш тĕлне тăван ҫĕршывăн оборона фондне Мускавра пурăнакансенчен 86,7 миллион тенкĕ укҫан пырса кĕнĕ.

Кунсăр пуҫне госбанкăн хулари конторине 5.467 тенкĕ те 50 пуслăх ылттăн укҫасем, 1.410 грамм платина, 7.719 грамм ылттăн тата 373 килограмма яхăн кĕмĕл пырса кĕнĕ.

Оборона фондне укҫа-тенкĕ парса тăрасси малалла та пырать. (ТАСС).

Хĕрлĕ Ҫар валли

Комсомольски районри Буденный ячĕпе тăракан колхоз ҫĕрулмипе пахча-ҫимĕҫсене пуҫтарса кĕнĕ хыҫҫăнах, хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Ҫар валли пахча-ҫимĕҫсем типĕтсе парас ĕҫе пуҫăнчĕ. Халĕ колхоз пахча-ҫимĕҫсем типĕтсе пама хăй ҫине илнĕ обязательствăна пурнăҫларĕ.

Пирĕн çĕршыври халăхсен никам çĕнтерейми туслăхĕ сывă пултăр!

Чăваш халăхĕ социализмлă тăван çĕршывăн кĕрешес ĕçре

З. АНДРЕЕВА
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ

Эпир Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа XXIV çул тултарнине пирĕн çĕршыва туртса илме хăтланакан нимĕç фашизмне хирĕç отечественнăй вăрçă пынă условисенче, халăхăн мĕнпур вăйĕсене фронт валли, нимĕçсен фашистла войскисене çĕмĕрсе тăкма мобилизациленĕ условисенче уявласа ирттеретпĕр.

Совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçи тăватă уйăх ытла пырать ĕнтĕ. Фашистсен «çиçĕм пек хăвăрт» иртермелли вăрçă планĕсем арканса кайрĕç. Çак вăхăт хушшинче нимĕçсен фашистла захватчикĕсене Хĕрлĕ Çар питех те пысăк çухатусем кӳнĕ. Пирĕн çулпуç Сталин юлташ пĕлтернĕ тăрăх, вăрçăн тăватă уйăхĕ хушшинче Хĕвел-тухăç фронтĕнче нимĕçсем, вилнисемпе аманнисене тата тытăна лекнисене шутласан, 4,5 миллион çын ытла çухатнă. Материальнăй чăссем енĕпе те нимĕçсем пысăк çухатусем тăваççĕ.

Пысăк çухатусем тунă пулин те, тăшман çапах та пирĕн территорин пĕр пайне вăхăтлăха туртса илме пултарчĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем, хăйсен мĕнпур резервисене пухса, пирĕн çĕршыва хирĕç çĕнĕ наступлени тума тытăнчĕç. Тăшман пирĕн тăван çĕршывăн чĕрине—Мускава тата пролетариллĕ революцин сăпкине—Ленинграда хăратса тăрать. Тăшман пĕтĕм вăйне хурса Донбасс, Ростов тата Крым патнелле талпăнса пырать. Анчах пур çĕрте те ăна Хĕрлĕ Çар вăйлăн пыра-пыра çапать, совет çĕрĕн кашни пусăмне хăйĕн кăкăрĕпе тăрса хӳтĕлет. Пирĕн çĕрĕн кашни утăмĕ тăшманăн хакла ларать.

Пирĕн тăван çĕршыв хăрушă та хĕрӳллĕ кунсенче пурăнать. Фронт Мускав патнелле сывхарса килчĕ. Вырăссен хаяр хĕлĕ килсе çитичченех тăшман Мускава туртса илме, ăна çаратса пĕтерме тата хĕл валли Мускаври ăшă хваттерсенче вырнаçса ларма хăпăнать. Анчах вăл пулаймĕ. Мускав патне пымалли вырăнсенче тăшман хăйĕн вилĕмне тупĕ.

Мускава тата пирĕн çĕршывăн промышленноçлă ытти центрĕсене хӳтĕлесси— алла хĕпăшал тытма пултаракан кашни ĕççыннин чыслă ĕçĕ пулса тăрать. Мускава, Ленинграда тата ытти хуласемпе ялсене хӳтĕлеме Хĕрлĕ Çарпа пĕрле пиншер те миллионшар рабочисемпе хресченсем тата служащисем çĕкленсе тăчĕç. Хĕрлĕ Çăрăн резервисем хăвăрт ӳссе пыраççĕ, вăл лайăх вĕренсе хатĕрленнĕ кадрсем килсе тăрать.

Сталин юлташ пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Флота пулăшмашкăн пĕтĕм вăя мобилизацилеме чĕнсе каларĕ. Çулпуç чĕннине ответлесе, хăйĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхне хӳтĕлеме пирĕн нумай миллионлă пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленчĕ.

Виçĕ аслă держава—СССР, Англия тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем союз турĕç. Пусмăрлакансемпе вĕлереканскен гитлерла шайккине хирĕç кĕрешме, ăна пĕтерсе хума çак союз ирĕклĕхе юратакан халăхсене пĕрлештерсе хăватлă фронт туса хучĕ.

Малашне çак виçĕ держава хăйсен мĕнпур вăй-хăватне Гитлерăн шайккине пĕтерсе лартас ĕçе ярĕç.

Пирĕн вăй-хăват кунран кун ӳссе пырать. Тăшманăн вăй-хăвачĕ чакса пырать.

Чăваш АССР Конституцин 100-мĕш статьинче çапла калана: «Тăван çĕршыва хӳтĕлесси Чăваш АССР-нчи кашни гражданинăн чи таса тивĕçĕ пулса тăрать», тенĕ. Хăйĕн Сталинла Конституцийĕн принципĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырса, чăваш халăхĕ, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне çирĕплĕн те паттăрлăн пурнăçлать. Пирĕн халăхăн чи лайăх ывăлĕсем, Хĕрлĕ Çар ретне тăрса, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç хăюллăн çапăçаççĕ.

Граждан вăрçин çулĕсенче, белогвардеецсемпе интервентсен кĕтĕвĕсем çамрăк Совет Республикине хăратса тăнă вăхăтра, Советсен çĕршывĕн мĕнпур халăхĕсемпе пĕрле, чăваш халăхĕн ывăлĕсем те рабочисемпе хресченсен социализмлă государствине хӳтĕлессишĕн çапăçнă. Чăваш халăхĕн чи лайăх ывăлĕсем Советсен çамрăк Республикишĕн хăйсен пурнăçне панă. Чăваш çĕршывĕ халăха юмахри пек паттăр Чапаева ӳстерсе пачĕ. Граждан вăрçин мухтавлă геройĕсене пирĕн халăх чыслăн асра тытать тата яланах асра тытĕ. Çав геройсен шутне Чкаловски районра çуралнă чăваша, çар комиссарне Крепков большевика кĕртме пулать. Белогвардеецсем Чĕмпĕре (халĕ Ульяновск), унтан тата Хусана тытса илнĕ), Патăръелле Елчĕк те шурриссен аллинче пулнă. Чăваш çĕршывне тăшмансем хупăрласа илнĕ. Патăръелĕнче вырнаçса ларнă белогвардеецсене хирĕç Пăвара Крепков организациленĕ партизансен отрячĕ тухнă. Белогвардеецсене хирĕç пынă хаяр çапăçура Патăръел патĕнче Крепков отрячĕ вилсе пĕтнĕ. Крепкова белогвардеецсем çавăрса илнĕ, вăл пулемет çумĕнчех вилнĕ.

Граждан вăрçин çав харушă хунĕсенчех Шупашкар Совечĕн руководителĕсенчен пĕри Иван Кадыков патăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Военно-революционнăй Советăн председателĕ пулса, Кадыков юлташ тылра йĕркене тунă тата добровольецсем, продуктсем ярса фронта пулăшас ĕçе организациленĕ, Совет власне пулăшас тĕллĕпе чăваш халăхĕ хушшинче агитаци тунă. Кадыков юлташа Совет власĕн тăшманĕсем 1918 çулти июлĕн 25-мĕшĕнче, Хусана хӳтĕлеме ямашкăн отрядсем пуха йĕркеленĕ вăхăтра, вĕлернĕ.

Перекоп перешеекĕ патĕнче красноармеец чăваш Иванов паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Геройăн ӳчĕ Сивашăн хăйăрĕсем айĕнче 15 çул хушши выртнă, ăна 1937 çулта тупнă.

Граждан вăрçинче паттăр ĕçсем тунăшăн Я. Н. Никитина (Элĕк р.), И. Е. Ефимова (Калинински р.), Н. В. Васильева, А. К. Нагибина (Куславкка р.), Ситникова, Серова (Кувакино р.), П. Н. Воронова тата граждан вăрçин ытти активлă участникĕсене те Хĕрлĕ ялав орденĕпе наградăланă. Чăваш халăхĕ граждан вăрçин çулĕсенче белогвардеецла бандăсене хирĕç паттăрăн çапăçнă хăйĕн ывăлĕсемпе тивĕçлипех мухтанать.

Хусана тытса илнĕ хыççăн белогвардеецсем Атăл урлă выртакан кĕпере взрыв туса сирпĕтсе яма хăтланнă, анчах çак ĕç ăнăçăр пулнă. Вара вĕсем, чугунçул линине татас тесе, Тĕрлемес станцине вут тивертсе янă. Çав кунсенче чăваш çĕршывĕн 28 хăюллă ывăлĕ Тĕрлемес станцинче снарядсемпе взрыв тăвакан ялаласем тиенĕ 50 вагона сыхласа тăнă. Хирĕç пенă, снарядсем çурăлни илтĕнмĕ. Пирĕн тăван çĕршывăн 28 хăюллă ывăлĕ çав кунсенче белогвардеецсен тата вырăнти кулаксен пулăлисем лекнипе вилнĕ. Чăваш ялĕсенчи малта пыракан хресченсем унта çав паттăрсене чыслăн пытарнă, вĕсене кашни çулах хисеплесе аса илеççĕ.

Граждан вăрçин çулĕсенче хамăрăн тăван çĕршыва хӳтĕлеме отрядсем хăвăрт организациленнĕ. Рабочисемпе хресченсем белогвардеецсен бандисене хирĕç кĕрешме Хĕрлĕ Çар ретне хăйсен ирĕкĕпех сыранна. Шупашкарта 266 çынран тăракан рота пухăнса йĕркеленнĕ. Пĕр Шупашкар вулăсĕнчех доброволецсен йышĕ 260 çынна çитнĕ, вĕсем пурте фронта тухса кайнă.

Фронта япат-çимĕç парса пулăшас ĕç вăйлăн пулса пынă. Туллимар сведенисем тăрăх, Шупашкар уездĕнчен кăна 1918 çулта фронта 7.299 пăт ыраш, 2.771 пăт сĕлĕ, 6.188 пăт çĕрулми, 29.702 çăмарта тата ытти продуктсем янă.

Чухăн хресченсен комитечĕсем митингсемпе пухусем туса ирттернĕ, çав пухусенче пĕтĕм чĕререн туртса калаçа, хресченсем Совет власĕн тăшманĕсене татăклăн çĕнтериччене Хĕрлĕ Çара пулăшма пулнă. 1918 çулти октябрĕн 30-мĕшĕнче Старо-Тĕбердин вулăсĕнче пулнă пухура хресченсем çар валли десятинран 3 пăтран пуçласа 5 пăт таран тырă пама пулса резолюци йышăннă. Вĕсем хăйсен резолюцийĕнче çапла калаçă:

«Эпир, Старо-Тĕбердин вулăсĕнчи граждансем, çапла пĕлтеретпĕр: Совет власĕ пĕрре чĕнсенех, эпир ывăлсене ăна сыхлама яратпăр, хамăр тырă пухас тĕллĕпе кулаксемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешетпĕр... Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар! Сывă пулччăр чухăнсен комитечĕсем!»

Хĕрлĕ Çар интернационаллă çар пулнă, халĕ те çаплах пулса юлать. Çавăнпа та ăна пĕтĕм ĕççыннисем, вĕсем мĕнле нацирен тухнине пăхмасăр, яланах пулăшнă тата халĕ те пулăшаççĕ.

Хасан кӳлли патĕнче пулнă çапăçусенче чăваш халăхĕн ывăлĕсем Сталинла Конституци панă правăсене паттăрăн хӳтĕлесе тăнă. Финляндири белогвардейщинăна хирĕç пынă вăрçăра та чăвашсем аслă Совет Союзĕн ытти халăхĕсемпе пĕрле çумма-çуммăн тăрса социализмлă тăван çĕршывăн хăюллăн çапăçнă. Вĕсенчен чи лайăхсене правительство пысăк наградăсем панă.

Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусенче Шупашкарти ремонтно-механически заводăн рабочийĕ пулнă Вячеслав Петрович Винокуров халама çук паттăрăн та хăюллăн кĕрешнĕ. Вăл боевой заданине пурнăçа кĕртме—тăшманăн огневой точкисемпе пралук картисене пĕтерсе тăкма кайнă. Тăшман вăйлăн персе тăнă пулин те, Винокуров юлташ, пехота валли çул тасатса парас тесе хăйĕн танкне пралук картасем урлă мар, вĕсем тăрăх илсе каять. Çапла майпа огневой точкăсене тата пралук картасене пĕтерсе тăкать. Танк командирĕ суранланать, унăн юн юхать. Тăшман снарячĕ пырса тивинче пула танк чарăнса тăрать, ун ăшĕнчи хăюллă геройсене самурайсем йĕриташах çăвăрса илеççĕ. Анчах та суранланнă Винокуров юлташ, комиссар Ефремов тата танк водителĕ Рассоха, хăюллисен вилĕмĕпе вилнĕскер, парăнмаççĕ. Çавăн пек лару-тăрура танк экипажĕ пĕр талăк хушши тытăнса тăрать. Çавăн хыççăн вĕсем тăшман çавăрса илнĕ вырăнтан хăтăлса тухаççĕ. Çак геройла ĕçшĕн, паттăрлăхпа чăтăмлăхшăн Винокуров юлташа Совет Союз Геройĕн званине панă. Вăл белофинсене хирĕç пынă çапăçусенче те пулнă. Сураннăсем тӳрленсе çитеймен пулин те, Винокуров юлташ халĕ Совет танкисчĕсен ретне тăрса нацистла ирсĕрсене хирĕç кĕрешет.

Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Совет Союзĕн Правительстви кĕçĕн командирăн Хрусталевăн отделенине орденсемпе наградăланă. Вĕсен шутĕнче пулеметчик Куделькин тата боец Краснов пулнă, вĕсем иккĕшĕ те Улатăр районĕнчен. Хрусталев юлташа (Шăхасан районĕнче çуралнă, юлашки вăхăтра ВЛКСМ Обкомĕнче ĕçленĕ) Ленин орденĕ парса наградăланă. Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах вăл, доброволец пулса, фашистла йыткĕтĕвĕсене хирĕç фронтра кĕрешет.

Белофинсене хирĕç пынă кĕрешӳ фронтĕнче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн В. А. Вавашкин юлташа Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. П. С. Куделькин (Улатăр р.), М. Л. Цапин (ВРЗ) юлташсене Хасан кӳлли патĕнче çалăçса паттăрлăх кăтартнăшăн, В. Н. Ефремов (Вăрнар р.), И. В. Уткин (Çĕрпӳ р.), М. Н. Капитанов (Вăрмар р.) юлташсене белофинсене хирĕç кĕрешнĕ чух паттăр ĕçсем тунăшăн Хĕрлĕ Çалтăр орденĕсем парса наградăланă. Çакăн пек наградăсем илнĕ чăваш паттăрĕсен списокĕ.

Чăваш халăхĕн хăюллă ывăлĕсем Германи фашизмне хирĕç пыракан çапăçусенче те халама çук пысăк паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса параççĕ. Совет Информаци Бюровĕ августăн 8-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, капитан-орденоносецăн И. П. Петровăн танксен подразделенийĕ 7 сехет хушши пынă çапăçура противникăн 40 танкне çĕмĕрсе пĕтернĕ. Çак подразделени паттăрлăхĕпе хăюлăхĕ çинчен пĕлтерекен хыпар мухтавлă танкистăн тăван колхозĕ патне çитнĕ. Вăрнар районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен мухтавлă землякĕн чысне çӳлте тытма пулнă. Вĕсем тылра, танкист Петров фронтра çапăçнă пекех, паттăрăн кĕрешеççĕ, ялхуçалăх продукчĕсем памалли пур обязательствăсене те вĕсем вăхăтра пурнăçа кĕртнĕ.

Противникăн чĕрĕ вăйне тата материальнăй чаçне летчик-комсомолец Петр Павлов (Элĕк районĕнчи Мăн Тукташ ялĕнчен) ăнăçлăн пĕтерсе пырать. Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çак ĕçсе хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Павлов юлташа Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă.

Старший политрук Павлов юлташăн (Çĕрпӳ районĕнчен) паттăрлăхĕ çинчен те халаса хăвармалла. Павлов юлташ—ВКП(б) членĕ, граждан вăрçин участникĕ, Хаяр çапăçу вăхăтĕнче батальон командирĕ вилсен, Павлов юлташ паттăрлăхпа хăюлăхăн образецне кăтартса панă. Вăл батальона ертсе пыракан çĕре çитсе илнĕ те, хăйĕн примерĕпе боецсене хавхалантарса пырса, боевой заданине пурнăçа кĕртнĕ.

Отечественнăй вăрçă геройĕ çинчен—пулеметчик Иванов çинчен Н-ски стрелковăй дивизин командованийĕ Шупашкар районĕнчи комсомолецсем патне çапла çырнă: «Сирĕн парнесене отечественнăй вăрçăн чи лайăх боецĕсене патăмăр. Чи лайăх парнене сирĕн земляк—пулеметчик Иванов илчĕ. Эсир унпа мухтанма та пултаратăр, вăл чăн-чăн герой. Хăйĕн пулеметĕнчен персе, Иванов юлташ 100 фашиста ытла пĕтерсе тăкрĕ».

Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăн фрончĕсенчи паттăр ĕççем çинчен тата юнĕçен тăшмана кураймасăр тарăхса тăни çинчен боецсем хăйсен землякĕсем патне çырса пĕлтереççĕ. Шăхасан районĕнчен кайнă А. Харитонов юлташ Хĕвеланăç фронтĕнчен: «Хамăрăн ирĕклĕхпе пурнăçа кăкăрпа тăрса хӳтлĕп тесе хамăн халăх умĕнче тупа тăватăп», тесе çырать. ВКП(б) Иĕпреç райкомĕнче ĕçленĕ П. Кураков юлташ фашистсен тытканĕнчен хăтăлса тухнă хыççăн çапла çырса пĕлтернĕ: «Фашистсем пирĕн халăхран ирсĕррĕн мăшкăлланине эпĕ хамăн куçсемпе куртăм. Коммунист пулса тăрса, эпĕ юлашки тумлам юн юлмиччен кĕрешĕп тата тăшмана пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе пырăп», тенĕ. Боецсем çыракан пур çырусенче те тăшмана хаярăн курайманни палăрса тăрать.

Фронт боецĕсем те тылран патриотизмлă темĕн чухлĕ çырусем илеççĕ. Фронтпа тыл тачă çыхăнса тăраççĕ. Вĕсем пĕр шухăшпа—фашистла çĕленкалтасене пĕтерсе тăкас шухăшпа пурăнаççĕ.

Кунта эпир хăшпĕр примерсене кăна илсе кăтартрăмăр. Совет çĕршĕн паттăрăн кĕрешекен геройсемпе патриотсем чăваш халăхĕ хушшинче питех те нумай. Вĕсем чылайăшĕ Одессăна хӳтĕленĕ çĕрте кĕрешнĕ, Мускавпа Ленинграда хӳтĕленĕ çĕрте кĕрешеççĕ.

Анчах чăваш халăхĕн ывăлĕсем отечественнăй вăрçă фрончĕсенче кăна мар паттăрăн çапăçаççĕ. Пирĕн республикăри çĕршер пин ĕççыннисем ĕç фронтĕнче паттăрăн ĕçлесе тыла çирĕплетсе пыраççĕ, тăшмана çĕмĕрсе тăкма пулăшаççĕ. Пирĕн предприятисенче двухсотниксемпе трехсотниксен йышĕ ӳссе пырать. Нумай предприятисен коллективĕсем, çавăн пекех колхозниксем те Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, икшер, виçшер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче производствăра пысăк ӳсĕмсем тунăшăн промышленноçри тата чугунçул транспортĕнчи чи лайăх производственник-стахановецсене 20 çынна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Хисеплĕ грамота парса наградăларĕ. Çав стахановецсем хушшинче Улатăр станцинчи депори дежурнăй А. К. Волков юлташ, Канаш станцинчи депори машинист П. Н. Назаров юлташсем пур. Вĕсем тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратнине ĕçре кăтартса пачĕç. Сăмахран, Назаров юлташ ялан пекех 70—80 сехет хушши пĕр улшăнмасăр ĕçлет, пĕррехинче вара вăл паровоз çинче пĕр улшăнмасăр 107 сехет хушши пулнă.

Волков юлташ хĕрсе кайнă паровоз кăмакине вилĕмрен хăрамасăр кĕрсе паровоз решеткине юсаса лартнă, ответлă заданипе каякан паровоза вăхăтра вырăна тăратнă. Çакна вăл тăван çĕршыва хĕрӳллĕ юратнипе тунă.

Çĕршер патриоткăсем-хĕрарăмсем тĕрлĕ профессисене вĕренсе фронта кайнă арçынсен вырăнне ĕçлеме тăчĕç. Ольга тата Люба Дербеневсем (Канаш станцийĕ) машинист помощникĕн тата кочегарăн профессине вĕренсе хăйсен тăванĕпе юлташĕ вырăнне ĕçлеме тăнă. Килхуçи хĕрарăмĕ А. Данилова юлташ слесарь профессине вĕреннĕ, вăл халĕ нормăна 150 процент тултарса ĕçлет. Пирĕн арçынсемпе хĕрарăмсен уйрăм профессисем çук. Елĕк арçын профессийĕ тесе шутланă молотобоец профессине отечественнăй вăрçă кунĕсенче производствăна ĕçлеме пынă. М. Федорова юлташ питех те лайăх вĕренсе алла илсе ĕçлеме тытăннă. Хĕрарăмсем хушшинче нумай профессисемпе ĕçлесси те сарăлсах пырать. Сăмахран, Ольга Прокопьева техник-нормировщикăн, контролерăн, нарядникăн тата бухгалтерăн профессисене вĕреннĕ, вăл хăйĕн ĕçне питех те лайăх туса пырать.

Шупашкарти авторемонтнăй заводри слесарĕн Алексеев юлташăн патриотла семьи тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçланă. Алексеев юлташа васкавлă задани панă пулнă, çав заданине пурнăçа кĕртме темиçе кун хирлĕ пулнă тата рабочисем хушса памалла пулнă. Çав ĕçе тума Алексеев юлташ хăйĕн арăмне тата ывăлне илсе пынă. Задание кĕске срокра пурнăçланă.

Колхозлă хресченсем те тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне пурнăçа кĕртес ĕçре рабочисенчен юлмаççĕ. Колхозсем нумайăшĕ государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене срокчен парса татрĕç, кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акса хăварчĕç. Республикăра планран ирттерсе [illegible] 24.278 гектар кĕрхи тырă акса хăварнă.

Фронта кайнă арçынсен вырăнне колхозниксем йышăнчĕç, вĕсем трактористсем, комбайнерсем тата ытти ĕçне ăнăçлăн туса пыраççĕ. Вăрнар МТС-чи фронта кайнă трактористсем вырăнне çамрăк хĕрачасем М. Быкова тата Е. Кузьмина юлташсем ĕçлеме тытăнă.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухаса перекетленĕ укçа-тенкине тата хăйсен ĕç укçин пĕр пайне оборона фондне парса, фронта активлăн пулăшаççĕ. Çапла майпа вĕсем тăшмана çĕмĕрсе тăкма ытларах та ытларах снарядсем, тупăсем, танксем, самолетсем тата ытти хĕçпăшалсем туса калаçма пулăшаççĕ.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем çĕршыв оборонин фондне 2 миллион та 500 пин тенкĕ укçа хывнăç.

Республикăра Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухасси патриотизмла пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Шупашкарти складран фронта ăшă тумтирсем икĕ хут ăсатнă та ĕнтĕ. Вăл шутра 533 мăшăр çăматă, 625 мăшăр алăпăш, 290 мăшăр çăм чăлха, 1460 çĕлĕк, 20 тăлăп, 96 кĕрĕк пиншак та ытти ăпаласем те пур. Куславкка районĕнче 2200 тир, 900 килограмм çăм, 320 çĕлĕк тата ытти ăпаласем пухнă. Çавăн пекех Елчĕк, Хĕрлĕ Чутай, Ишлей районĕсенче те çак ĕç пиллĕ ăнăçлăн пулса пырать. Пирĕн республикăри ĕççыннисем, Совет Союзĕнчи ытти халăхсем пекех, хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара продуктсемпе ăшă ăпаласем кирлĕ чухлех парĕç, çапла майпа тăшмана тĕпчипех аркатса тăкма пулăшĕç.

Пирĕн фронтпа тыл пĕрлĕхлĕ пулни-не фашистла захватчиксем пĕлсе тăчĕç. Хамăрăн тăван çĕршыва хӳтлеме нумай миллионлă совет халăхĕ хăйĕн пĕтĕм хăвачĕпе çĕкленчĕ. Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе ӳстернĕ халăх тăшман умĕнче нихăçан та пуç таймĕ. Гитлерла пуçкасакансем вăхăтлăха темĕнле ӳсĕмсем тусан та, пирĕн шанчăка, эпир хамăр çĕнтерессе шанса тăнине хуçаймĕç.

Çак хăрушă кунсенче тăван çĕршыв кашни гражданина татах та дисциплиннăллă, татах та чăтăмлă пулма фронтпа тыла çирĕплетессишĕн татах та паттăрăн кĕрешме хушать.

Хамăрăн геройла Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парăпăр. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн организаторĕ — Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ ертсе пынипе, аслă Сталин ертсе пынипе, совет халăхĕ хăйĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхне хӳтĕлесе хăварать. Тăшмана хамăрăн çĕр çинчен хăваласа яратпăр. Фашистсен пусмăрĕ айĕнче пурăнасси вилĕмрен те ирсĕртерех. Çавăнпа та пирĕн халĕ пĕр çул кăна: е çĕнтермелле, е вилмелле.

Нимĕçсен империалист-захватчикĕсене хирĕç кĕрешме хамăрăн мĕнпур вăя хурар. Йăлтах фронт валли! «Хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара, хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Флота пулăшма пĕтĕм вăя хурар. Тăшмана çĕмĕрсе тăкма халăхăн пĕтĕм вăйне парар!» (Сталин).



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. **Ухерчĕк çинче:** Н-ски чăсри сапĕрсем, пехота тухса кайма, пралук картана касса татаççĕ.
Р. МАЗЕЛЕВ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

ТИМЛĔН ХИРĔÇ ТĂНИ

ТУЛА, ноябрĕн 5-мĕш. («Правда» хаçатăн çар спецкорĕсем). Пирĕн боецсем Тула хули çывăхĕнче гранатăсен тата бутылкăсен сыххисемпе тăшман танкĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Юлашки кунсенче хулана пыракан вырăнсенче фашистсен 50 машинине яхăн пĕтерсе тăкнă, çунтарса янă тата стройран кăларнă.

Старший лейтенант Треповăн зенитчикĕсем противникăн танкĕсене тата самолечĕсене хирĕç хăюллăн кĕрешеççĕ. Тула хулишĕн пынă малтанхи кунри çапăçура вĕсем тăшманăн виçĕ танкне çунтарса янă, пилĕк танкне персе çĕмĕрсе стройран кăларнă тата тепĕр «Мессершмиттне» персе антарнă.

Тулара пурăнакансем хăйсен тăван хулишĕн пĕр шиксĕр тата пултарулăн çапăçаççĕ. Комсомолка Надежда Степанова, минометсенчен персе тăнине пăхмасăрах, аманнă 21 çынна çапăçу хирĕнчен илсе тухнă. Хăюллă сестра аманнă пулнă, вăл командир приказ панă хыççăн кăна госпитале кайнă.

Тула хули пысăк хăрушлăхра. Тăшман инçе мар, юнашарах, хулан главнăй урамне кĕмелли Орел енчен килекен шоссе çинче. Сăнав пунктĕнчен тăшман пехоти, грузовиксем куçни курăнать. Вĕсем хулана аййисенчен пырса çавăрса илесшĕн. Противник резервсем пухать, пирĕн огневой точкăсене минометсенчен перет.

Сакăрĕмĕш кун ĕнтĕ çапла пулса пырать.

Ултавлă, вăйлăн хĕпăшалланнă тăшман Тула хулине хӳтĕлесе тăракансен тимлĕн хирĕç тăнине тĕл пулĕ.

О. МИТНИЦКИЙ,
М. СИВОЛОБОВ.

Йăçлă контратакăсем

ВОЛОКОЛАМСК ЕНĔ, ноябрĕн 5-мĕш. (Телефон тăрăх). Швецов тата Малыгин командирсен чăсĕсем иккĕмĕш кун ĕнтĕ противника хирĕç вăйлă контратакăсем тăваççĕ. Артиллеристсем нимĕç войскисен оборонин малти хĕрринче противника вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Ефременко юлташăн батарейисем кăна тăшманăн орудине, виçĕ минометне, пулеметсен ултă точкине, нумай транспортне тата чĕрĕ вăйне пĕтерсе тăкнă.

Швецов юлташ командир пулса ертсе пыракан стрелковăй часть хăюллă контратака туса, противник войскисем тăракан çĕре савăл пек кĕрсе кайнă, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Штых вĕççĕн çапăçнă чухне пирĕн боецсем икĕ миномет тата тепĕр пулемет тытса илнĕ.

Доватор юлташăн кавалери группин малтанхи пекех тăшман тылĕнче кĕрешет, тăшмана пысăк çухатусем кӳрет. Пултаруллă конниксем халăх пурăнакан пĕр пункта йышăннă, çав çапăçура фашистсен 100 çынна яхăн вилнĕ тата аманнă.

Г. МАНЕРНОВ.

Чăвашсем тăван çĕршыва çирĕппĕн сыхласçĕ

Урса кайнă Германи фашисчĕсем тата вĕсене сутăннă белофинсем халама çук пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çара çĕнтерме çуккине, хăйсем час пĕтессине туйса илчĕç. Анчах çапах та вĕсем хăйсен тискерлĕхĕпе ăçта кирлĕ унта пысăк сиен кӳме тăрăшаççĕ. Хăйсен вилĕмне туйса татах та татах тапăнусем тăваççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçăра тискер фашистсене хирĕç Чăваш республикинчен килнĕ красноармеецсем те паттăрăн çапăçаççĕ. Вĕсем те ытти боецсемпе пĕрле тăван çĕршыва урса кайнă тăшмансенчен сыхласçĕ.

Чăвашсен юридически шкулĕнчен вĕренсе тухнă А. Пондеркин красноармеец халăхи вăхăтра военнăй трибуналăн следователĕ пулса ĕçлеме лартрĕç. Пондеркин хăравçăсене, паникерсене хирĕç çирĕппĕн кĕрешет тата çапăçура та паттăрăн çапăçать.

* * *

Белофинсем пирĕн пĕр участок çине хаярăн тапăннă. Пирĕн красноармеецсемпе командирсем çак участока çирĕппĕн хӳтлесе тăнă пулнă. Тăшман тĕрлĕ пăшалсенчен персе красноармеецсем çине малаллах пынă. Снарядсем сывăхрах çурăлнă. Снарядсем лекнипе телефон линийĕн провочĕсем темиçе çĕртен татăла-татăла кайнă, оборонăра тăракан красноармеецсен командирĕн пунктпа сыхăну татăлнă. Анчах та Вадим Пелеевпа Демид Сурнаев связистсем, пульăсем пуç çинче шăхăрнине пăхмасăрах, татăлнă телефон провочĕсене юсаса кайнă çăсне пĕр сурансăр тавăрăннă. Сыхăну ĕçлеме пуçланă.

* * *

Пелеевпа Сурнаев юлташсем хăйсен тăван колхозĕнче те яланах сыхăну тытса тăраççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те Октябрьски районри «Звезда» колхозран Хĕрлĕ Çара пĕрле килнĕ. Нумай пулмасть вĕсем тăван колхозне тăшмана çĕнтерме мĕн май пур, çавăнпа пулăшма чĕнсе çыру çырчĕç.

«Тăван çĕршывшăн!», «Аслă Сталиншăн!»—çак лозунгсемпе боецсем тăшман çине контратакăсем тăваççĕ, тăшман вăйĕсене хавшатаççĕ.

Пондеркин, Пелеев, Сурнаев юлташсем пек паттăрăн çапăçакан чăвашсем çĕршерĕн, пиншерĕн шутланаççĕ. Хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр тăван çĕршыва урса кайнă çĕлен-калтасенчен сыхласçĕ.

М. РЫБАКОВ.
Действующи армин.

ТĂВАН МУСКАВ

Пурне те хамăр хил пек сывăх эс,
Мускав, Мускав—çĕршывăмăн чĕри!
Сан ятуна вилес е çĕнтерес
Тесе тупа тăвать кашни-пĕри.

Хальччен сана ĕмĕтĕнче савса
Пурăнакансем паян карах тăрса,
Нихçан сан ялаву усăнмасса,
Кĕреççĕ саншăн татăклă вăрса.

Мускав, Мускав! Сана итлет тĕнче,
Пур ĕççынни сана сунать вăй-хал.
Тĕреклĕ Кремль башни çийĕнчен
Çаплах янрать Интернационал.

Вăл янрĕ яланах. Тупăпала
Хуплаймĕ ирсĕр сынçиен ăна.
Ярса пусмассерен тупăкалла
Тĕртет истори юнлă тирана.

Кам хĕç çĕклет—çав хĕренех пĕтет.
Ун пек каппайчăхсем пулманах мар.
Тăрăслăхе касаймĕ нимĕн те
А тĕрĕслĕх—санра, Мускавăмăр!

Тек ют ура пулаймĕ Кремльре,
Тăшман таптаймĕ санăн урамна:
Кунта халь Ленин шухăшĕ вĕрет,
Кунта халь Сталин-шанчăк пурăнать.

П. ХУЗАНГАЙ.

Артельсен çитĕнĕвĕсем

ВĂРНАР, ноябрĕн 6-мĕш. (Телефонпа). Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, районри урапа-çуна тăвакан мастерской хăй çине производство планне срокчен тултарма обязательство илнĕ пулнă. Унăн уйăх хушшинче мастерскойăн 33.400 тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла пулнă. Халĕ мастерскойăн унăн уйăх планне ытлашшипех тултарса, 37.657 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Уйрăм стахановецсем ĕç нормине 170—200 процент таран тултарса пыраççĕ. Урапа тăвакан 60 çулхи А. Кораков кулленхи нормăна 200 процент тултарса ĕçлет. П. Васильев 150—170 процент, тимĕрçĕ Л. Бурмашев икĕ çынпăн ĕçлесе ĕç нормине 200 процент тултарать.

Çавăн пекех «Труд» артель те Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕ. Стахановецсем Федор тата Константин Манякинсем çунасем тунă çĕрте ĕçлесе пысăк çитĕнӳ турĕç. Артель октябрь уйăхĕн планне 160 процент тултарнă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкассишĕн пыракан кĕрешĕвĕн организаторĕ— Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ сывă пултăр!

Уява ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленипе кĕтсе илетпĕр

Пирĕн колхозăн уйхирĕнче вăйлă тырпул çитĕнчĕ. Вăтам шутпа гектартан 110 пăт, уйрăм участоксенче 120 пăт ыраш туса илтĕмĕр.

Уйри тырпулсене отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра чи кĕске срокра пысăк пахалăхпа пуçтарса кĕртрĕмĕр. Колхозниксемпе колхозницăсем уйхирте те, авăн çапнă çĕрте те, пĕр сăмахпа каласан, колхозăн мĕнпур ĕçĕнче нихăçанхи пек мар пысăк тимлĕхпе ĕçлерĕç. Ялхуçалăх ĕçĕнче пире пионерсемпе шкул ачисем те нумай пулăшрĕç.

Эпир тырпулсене çапса пĕтертĕмĕр. Тĕштырăсене дезинфекци туса тасатса хатĕрленĕ амбарсене хыврăмăр. Авăн çапнă çĕрте иккĕмĕш бригада (бригадирĕ С. Михайлов юлташ) малта пычĕ.

Ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухни тата туртăм вăйăпе пĕлсе усă курни ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пыма май пачĕ. Авăн çапса пĕтернĕ тата государство умĕнчи тĕштырă, аш-какай, сĕт-су тата ытти обязательствăсене тултарнă хыççăн тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама хатĕрленме тытăнтăмăр. Хальхи вăхăтра общественнăй фондсене çителĕклĕ таранах уйăрса хăваратпăр. Фураж тата продовольстви фончĕсем иртнĕ çултинчен пысăкрах пулаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ĕçкунĕсене тĕрĕс шутласа панине тĕрĕслешĕр, бригадăсем, звенosем тата уйрăм колхозниксемпе колхозницăсем планлă заданисене мĕнле тултарнине палăртатпăр.

Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, хашни ĕçкунĕ çине тăваттăр килограмм тĕштырă, унсăр пуçне тата пахча-çимĕççем те чылай валеçĕнмелле. Тăрĕ кăмăлпа ĕçлекен колхозниксем, сăмахран, Тимофеева, Шаланова, Архипова, Тихонов, Федорова юлташсем хăйсен ĕçкунĕсем тăрăх çĕршер пăт ытларах тĕштырă илеççĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнсан колхозăн ĕçĕсене тепĕр хут пăхса тухрăмăр. Туса çитерейман ĕçсене çийĕнчех туса çитертĕмĕр. Ялхуçалăх ĕçĕсене туса пынипе пĕр вăхăтрах выльăхсене хĕл каçарма тăрăшса хатĕрлентĕмĕр. Октябрь уйăхĕнче фермăсен витисене мăкласа, шăтăк-çурăксене питĕрсе тухрăмăр. Кăçал пирĕн выльăхсем валли апат çителĕклĕ пулать.

Колхозниксемпе колхозницăсем гитлерла бандитсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парса пулăшма тăрăшаççĕ. Çĕршывăн оборона фондне тĕштырă, аш-какай, çăмарта тата укçан патăмăр. Колхозниксемпе колхозницăсем кашни уйăхрах пĕрер ĕçкунĕ çине тивекен тупăша парса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 14 тир, 5 килограмм çăм, алшипсемпе чăлхасем тата мулаххайсем пухса патăмăр. Çак ĕçе малалла та туса пыратпăр.

Çапла пирĕн колхоз Октябрь уявне ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленипе кĕтсе илчĕ. Эпир хамăрăн çитĕнӳсене çирĕплетсе, фронта татăк та вăйлăрах пулăшса пыма пулатпăр.

И. ПАВЛОВ.

«Вулкан» колхоз председателĕ.
Çĕрпӳ р.

Тăван çĕршыв шанса панă ĕç

Манăн чи сывăх юлташсем, Апнерти туллимар вăтам шкулта учитель пулса ĕçленĕскерсем, отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех фронта кайрĕç. Виçĕ çул хушши директор пулса ĕçленĕ комсомолец М. Дубровин халĕ Ленинград патне пымалли вырăнсенче совет танкĕсен подразделенине ертсе пырать. Учитель-отличник Н. Кириллов, Одесса хулине хӳтĕленĕ çĕртте пĕрре аманса юсаннă хыççăн, халĕ фронтăн Можайск енчи участокĕнче çапăçать. Çавăн пекех П. Антоновпа П. Васильев юлташсем те фронтра, Донбаса хӳтĕленĕ çĕртте çапăçаççĕ.

Эпĕ хамăн сывлăха пула фронта кайма тивĕçлĕ пулаймарăм. Анчах мана тăван çĕршыв тылра пысăк та ответлă ĕç шанса пачĕ. Эпĕ—учитель. Çĕршыв манран çĕнĕрен çĕнĕ геройсем вĕрентсе çитĕнтерме ыйтать.

Çĕршыв ыйтнине тивĕçтерессишĕн эпĕ пĕтĕм вăя хурса ĕçлетĕп. Шкулта эпĕ чăваш чĕлхипе литературине вĕрентетĕп. Çак предметсем вĕсем тин çеç аталанса пыраççĕ-ха, вĕсем ӳсĕм çулĕ çинче тăраççĕ. Вĕсен малашлăхĕ пысăк.

Пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнса кĕнĕ гитлерла сынçиенсем пирĕн пурнăç çулне, культура çулне татасшăн. Вĕсем пирĕн пек халăхсен культурине çунтарса ярасшăн; вĕсем шкулсене, кĕнекесемпе хаçат-журналсене хупасшăн. Тăван чĕлхене пĕтерсе лартса, пире ирĕккĕрех нимĕç чĕлхипе калаçтарасшăн. Фашистла ирсĕрсем пирĕн халăхăн тин çеç аталанса пыракан литературипе искусствине туртса илесшĕн, пирĕн юратнă совет писателĕсен кĕнекисене çунтарса ярасшăн. Анчах çук, ылханлă тăшманăн тискерлĕхĕсем пурнăçа кĕреймĕç. Культура тăшманĕсем—çав ирсĕр варварсем пирĕн культурăна туртса илеймĕç.

Çĕнтерӳ пирĕн алăрах пулать. Çĕнтерӳ валли эпир, учительсем, мĕн тăватпăр-ха? Вăрçă вăхăчĕ мана икĕ çын вырăнче ĕçлеме хушрĕ, эпĕ çанă тавăрсах ĕçлетĕп. Август уйăхĕнчен пуçласа эпĕ—Кĕçтемĕрти туллимар вăтам шкулта V «Б» класăн руководителĕ. Манăн класри ачасем чăннипех те вăрçă вăхăтне туйса тăрса вĕренеççĕ. Ачасем шкулта лайăх вĕреннипе пĕрлех, колхоза, фронта пулăшас тĕлĕшпе те хастарăн ĕçлеççĕ. Хамăр класпа эпир пĕтĕмпе 38 центнер тимĕртăмăр, 23 центнер кăмпа пухрăмăр; колхоза 13 гектар сĕлĕ, 11 гектар ытти тĕрлĕ тырпул вырса патăмăр. Çак ĕçре Измакова, Фадеева, Быкова, Назаров, Семенов пионерсем хăйсене уйрăмах палăртрĕç.

Вĕренекенсенчен нумайĕшĕсем ашшĕсем фронтра çапăçаççĕ. Быкова пионеркăн ашшĕ сентябрь уйăхĕнче фронта тухса кайрĕ. Килте вĕсен вĕт-шакăр ачасем кăна юлчĕç. Быкова умне шкул тулашĕнче юлас хăрушлăх тухса тăчĕ. Эпир Быковăна пулăшрăмăр. Килти ĕçсене тума вĕсене час-часах юлташĕсем кайса пулăшаççĕ. Çавăн пекех тăлăха юлнă Герасимовăна та эпир ушкăнпа пулăшса пыратпăр. Эпĕ ăна хамăн ача чухнехи кĕрĕке парса, ытти ачасем кам мĕн пама пултарнă, çавна парса пулăшрăмăр. Герасимова халĕ шкула пĕр сиктермесĕр çӳрет, лайăх вĕренсе пырать.

Манăн класри пионерсем фронтри боецсем валли пахча-çимĕççем типĕтсе парас ĕçре колхозниксене хастарăн пулăшса пыраççĕ. Кашни ача 4 килограмм кая мар çĕрулми, пĕрер килограмм сухан типĕтсе пама сăмах пачĕ. Çак ĕçе эпир ноябрĕн 7-мĕш тĕлне пĕтĕмпех туса çитеретпĕр.

Шкулта ачасене вĕрентнипе пĕрлех, эпĕ ялти ĕççыннисем хушшинче активлăн ĕçлетĕп. Колхозниксем хальхи вăхăтра пур ыйтусемпе те интересленеççĕ, вĕсем мĕн те пулин ыйтса пĕлес пулсан тӳрех учитель патне пыраççĕ. Эпĕ Одиковăри «Майăн 1-мĕш» колхозра агитатор пулса ĕçлетĕп. Сентябрĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласа эпĕ колхозри бригадăсенче 22 хутчен калаçусемпе докладсем туса ирттернĕ, халĕ çар техникине вĕренес ĕçе тытăнтăмăр.

Ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пĕлсен, пур çĕре те вăхăт çитет. Мана массăллă-политикăллă ĕçе туса пыма хамăрăн класри ачасем лайăх пулăшса пыраççĕ. Эпĕ пулăшнипе вĕсем 62 хуçалăха куллен хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Çамрăк вулавçăсенчен Назаров, Афанасьев, Ефимова, Панькова, Васильев, Петрова пионерсем уйрăмах хастарăн ĕçлеççĕ. Вĕсем 21 колхозника ПВХО нормисене пама хатĕрлесе çитернĕ.

Йăлтах фронта валли, йăлтах çĕнтерӳ валли! Эпĕ хамăн уроксене яланах çак лозунга асра тытса ирттерсе пыратăп. Тăван чĕлхепе литературăна вĕрентес ĕçе эпĕ отечественнăй аслă вăрçă ыйтăвĕсемпе сыхăнтаратăп. Литература урокĕсенче халăх паттăрлăхĕ çинчен, халăхăн паттăр ывăлĕ-хĕрĕсем çинчен калакан произведенисене вуласа сӳтсе-явнă чухне эпĕ ачасен патриотла туйăмне татах та ытларах çулăмлантарма тăрăшатăп. Çапла вĕрентни питех те паха результатсем парать. Ачасем оборона ĕçне тимлĕнрех вĕренме пуçларĕç, вĕсенчен чылайăшĕсем тĕрлĕрен хĕçпăшал моделĕсем тăваççĕ.

— Эпир—пионерсем. Пирĕн пурне те пĕлмелле,—теççĕ ачасем.

Çапла ĕçлетпĕр эпир. Тăван çĕршыв шанса панине эпир тӳрре кăларатпăр. Тăван çĕршыва тăшмансенчен хӳтĕлеме Хĕрлĕ Çар валли çĕнĕрен çĕнĕ паттăр та хăюллă боецсем çитĕнтерсе пыратпăр.

Учитель С. СЕЛЕЗНЁВ.

Кĕçтемĕр, Вăрнар р.

Аслă уяв ячĕпе тунă пысăк çитĕнӳсем

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри колеснăй цех Аслă уява октябрь уйăхĕнчи плана 104 процент тултарнипе кĕтсе илчĕ. Уяв умĕнхи ăмăртура коммунист Малеваный ертсе пыракан 5-мĕш комплекс мала тухрĕ. Вăл октябрь уйăхĕнче планран ирттерсе 18 вагон юсаса кăларчĕ. Çакă вăл—мухтавлă комплекс коллективĕ çĕршыва тата фронта аслă уяв ячĕпе кӳнĕ парне.

Комплексăн чылай бригадисем уяв умĕнхи ăмăрту кунĕсенче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Уйăхри заданирен ирттерсе столярсен Степанов ертсе пыракан бригади виçĕ вагон, Мординенко юлташ бригади икĕ вагон юсарĕ.

Рязанцев юлташ ертсе пыракан 6-мĕш комплекс ăмăртура хисеплĕ вырăна тухрĕ. Планран ирттерсе 6 вагон юсаса кăларчĕ.

Инструментальнăй цехри фрезеровщик Осипов юлташ специальнăй задани илнĕ. Вăл 27 сехет хушши цехран тухмасăр ĕçлесе, заданине срокчен пурнăçланă.

Токарь Болахолец, тимĕрçĕ Федин юлташсем сменăри заданисене 3—4 хут тултарса пычĕç. Октябрĕн 30-мĕшĕнче сменăри нормăна Федин 271 процент, Болахолец 421 процент тултарнă.

Çак кунсенче Хусан чугунсулĕн Капаш деповĕнчи стахановла бригадăсем яланхинчен ик-виç хут вăйлăрах тата хăвăртрах ĕçлерĕç. Самрăксен Черкасов юлташ ертсе пыракан бригади ноябрĕн 3-мĕшĕнче икĕ паровоз юсаса кăларчĕ.

Т. ИВАНОВ.

* * *

ÇĔРПУ, ноябрĕн 6-мĕш. (Телефонпа). Профтехшкул коллективĕ çулталăк программине октябрĕн 1-мĕш тĕлне 150 процент ытла пурнăçланă. Шкулта вĕренекенсемпе ĕçлекенсем уяв умĕнхи ăмăртура татах та паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Кĕпе-йĕмсем çĕлеме вĕренекенсен II-мĕш группине инструктор Якубсон ертсе пырать. Вăл группа кулленхи нормăна 200-шер процент тултарать. Захаров, Кузнецова, Кириллова, Семенова тата ытти юлташсем нормăсене 125—140 процент таран тултарса пыраççĕ.

Васкавлă заказсене пурнăçланă вăхăтра вĕренекенсем Александрова, Иванова, Майков, Герасимов юлташсем 2-шер смена ĕçлеççĕ. Пĕрремĕш группа сентябрь уйăхĕнче вĕренме тытăннă пулин те, ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Яковлева, Федоров, Григорьев, Михайлова тата ытти юлташсем хăйсене панă заданисене вăхăтра пысăк пахалăхпа пурнăçласа пыраççĕ.

Профшкул коллективĕ Октябрь уявне çулталăк программине 200 процент пурнăçланипе кĕтсе илчĕ.

Г. ПЕТРОВ.



КУСЛАВККА. Н. Максимова юлташ пĕрремĕш номерлĕ цехра детальсене пуçтарнă çĕрте ĕçлет. Уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса вăл октябрь уйăхĕнче 22 сехет хушшинче тумалли ĕçсене 11 сехет хушшинче пурнăçларĕ. Кольцова юлташ та унпа танлашма тăрăшса ĕçлесе, уйăхри плана 170 процент тултарчĕ.

Тимĕрçĕ Максимов юлташ—чи лайăх стахановецсенчен пĕри. Вăл октябрь уйăхĕн планне 250 процент пурнăçларĕ. Столяр Харинский юлташ та уйăхри плана 209 процент тултарчĕ. Двухсотник Марков юлташ хăйне панă заказа пысăк пахалăхпа пурнăçларĕ. Вăл Октябрь уявĕ умĕн 5 ачана сборщик профессине вĕрентме пулчĕ. Марков юлташ хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртрĕ. Çĕнĕрен пырса кĕнĕ столяр Воронцов юлташ ĕç нормине 200 процент тултарса ĕçлеме пуçларĕ. Вăл октябрь уйăхĕн планне 199 процент пурнăçланă.

Рамщик-комсомолец И. Петров юлташ та ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартса парать. Вăл кулленех 120—130 процент тултарса пырать. Сборщица Л. Никулина юлташ октябрь уйăхĕн планне 179 процент тултарнă.

Çакнашкал примерсем пирĕн заводра питех те нумай. Халĕ рабочисем пурте çулталăк планне срокчен пурнăçлама тăрăшса ĕçлеççĕ.

А. ПЕТРОВА.

* * *

КАНАШ. (Хăмăр корр., телефонпа). Хулари промысла артелĕсем Октябрь уявне обязательствăсене чыслăн пурнăçланипе кĕтсе илчĕç. Инвалидсен «Красный воин» артелĕ (пердседателĕ Корчагин юлташ) октябрь уйăхĕн планне 20 кун хушшинче пĕтĕмпех тултарма, ноябрĕн 7-мĕш тĕлне IV-мĕш квартал планне çурри ытла тултарма обязательство илнĕ. Халĕ артель коллективĕ çак обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçларĕ. Çулталăкри планран ирттерсе 250 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Октябрь уйăхĕн планне 26 кун хушшинче, çулталăкри плана октябрĕн 25-мĕш тĕлне тултарас—çапла пулнă «Швейник» артелĕн обязательствисем. Коллектив вĕсене чыслăн пурнăçларĕ. Асăннă сроксем тĕлне уйăх планне 107 процент, çулталăк планне 117 процент тултарчĕç.

«Авангард» артель коллективĕ те хăйĕн обязательствине пурнăçа кĕртрĕ. Ноябрĕн 1-мĕш тĕлне уйăхри планран ирттерсе пĕр миллион та 500 пин тенкĕлĕх продукци пачĕ.

Кĕпе-йĕм çĕлекен, çăкăр пĕçерекен тата парикмахер цехĕсем иртнĕ уйăх планне 200—250 процент тултарчĕç.

Вырăнти промышленность системине кĕрекен индпошив мастерскойĕ (директорĕ Данилов юлташ) октябрь уйăхĕн планне 25 кун хушшинче тултарас тесе илнĕ обязательствăне пурнăçа кĕртрĕ.

Аслă уява производствăллă çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе, фронта пулăшассине вăйлатнипе палăртса тăвас шухăш-кăмăлсемпе ĕçлерĕç артельри двухсотниксемпе трехсотниксем.

«Авангард» артельри кĕпе-йĕм çĕлекенсем Михаил Балабанов сменăри нормăна 5,5 хут, Наборкина, Абрамова юлташсем 2-шер хут тултарса ĕçлеççĕ. Парикмахер А. Перлова ĕç нормине 2,5 хут, «Швейник» артельри работницăсем К. Антонова, К. Прокопьева, Е. Семенова кулленхи нормăна виçшер хут ирттерсе тултарса пычĕç.

Ĕç тухăçлăхĕ пысăк, ĕç укçи те пысăк

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр. телефонпа). «Пурте фронт валли! Пурте çĕнтерӳ тума!» Çакăн пек лозунгпа ĕçлесе кĕтсе илчĕç древкомбинатри рабочисем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă уява. Чылай цехсемпе сменăсем тата бригадăсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ытлашшипех пурнăçларĕç. Данилов юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура уйрăмăнах пысăк çитĕнӳ турĕ. Вăл кăçалхи çул программине 10 уйăх хушшинче тултарса, планран ирттерсе 20 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Арбузов, Шустов юлташсем ертсе пыракан цехсем те октябрь уйăхĕн планне ытлашшипех тултарчĕç. Чаплă уява уйрăм стахановецсем рекордла çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ. 9-мĕш номерлĕ цехри стахановец слесарь Александр Антоллонов октябрь уйăхĕн планне 320 процент, литейщик Федянкин 300 процент, тимĕрçĕ Цитлер 325 процент тултарчĕç. Ноябрь уйăхĕнче те кашни кунах 2,5—4 норма тултараççĕ. Цехра нормăна тултарман çын çук. Виççĕмĕш номерлĕ цехри паллă стахановецсем Яков тата Степан Кондратьевсем уява кулленхи плана 2—2,5 хут тултарса кĕтсе илеççĕ. Ĕç тухăçне ӳстернĕ майпысăк ĕç укçи илеççĕ. 6-мĕш номерлĕ цехри столяр Максим Ежов сентябрь уйăхĕнче 772 тенкĕ илнĕ, октябрьте 1.019 тенкĕ илнĕ, Дмитрий Будачев октябрьте 1.163 тенкĕ илнĕ, Михаил Костин 1.323 тенкĕ илнĕ. Вĕсем нормăсене 2—4 хут тултараççĕ.

Ывăлне шантарса каланине пурнăçа кĕртсе пырать

— Итле тата ĕнен, ывăлăм, аçуна, юлашки юн тумламĕ юлмиччен паттăрăн çапăç, Германи фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршывăн вăй-хăватне туйса илччĕр, хăйĕн юнлă аттисемпе пирĕн колхозсен анлă уйхирĕсене ан таптаччăр. Санăн киле юлакан аçу, ватă пулсан та, колхоза тĕреклетессишĕн тата мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшассишĕн ырми-канми ĕçлĕ. Уйри тырпулсене эпир кĕске срокра, тăккаламасăр пуçтарса кĕрĕпĕр, — тенĕ Иван Павлов хăйĕн ывăлне Хĕрлĕ Çара ăсатнă чухне.

Унтанпа тăватă уйăх иртрĕ. И. Павлов юлташ колхозăн мĕнпур ĕçĕнче те активлăн хутшăнса ĕçлет, хăй 69 çулта пулсан та, ĕçре ытисене пример кăтартать, ывăлне шантарса каланине çирĕплĕн пурнăçа кĕртсе пырать.

Хальхи вăхăтра Павлов юлташ колхозра Хĕрлĕ Çар валли пахча-çимĕççем типĕтсе парас ĕçе ертсе пырать. Çĕрулмипе ытти пахча-çимĕççем типĕтсе памалли октябрь уйăхĕнчи плана срокчен тултарнă, районра пĕрремĕш вырăн йышăннă. Халĕ ноябрь уйăхĕнчи плана срокчен тултарассишĕн кĕрешет.

Çак кунсенче Павлов юлташ хăйĕн ывăлĕнчен çыру илчĕ. Вăл сырăва хавасланса вуласа тухрĕ.

«Атте-анне, эсир маншăн ан кулянăр, эпĕ сывах. Германи фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршывăн чĕрине — Мускава тытса илесшĕн. Пĕлесчĕ сирĕн, Мускавшăн пыракан çапăçура Германи салтакĕсем вунпар пинĕн пĕтеççĕ. Германи фашисчĕсем хăйсен салтакĕсене хĕрхенсе тăмаççĕ, вĕсем çĕнĕрен вăй ярса тăраççĕ.

Анчах геройла Хĕрлĕ Çар Германи фашисчĕсем хĕснине вăйлăн сире-сире пăрахать, Мускав хулине çавтери хăюллăн хӳтлесе тăрать. Тăшман Мускав патĕнче хăйне валли вилĕм тупĕ, вăл Мускава кĕрейрес çук.

Колхозра тăрăшса ĕçлĕр, дисциплинăллă пулăр. Тыл çирĕп пулни фронта пысăк çитĕнӳсем тума пулăшать», тесе çырнă çырура.

Павлов юлташ хăйĕн ывăлĕн çыруне ытти колхозниксене те вуласа панă. Колхозниксем хăйсен землякĕ хушса çырнине çирĕплĕн пурнăçа кĕртсе пыма пулчĕç.

Хальхи вăхăтра колхозниксем ялхуçалăхĕн кĕрхи ĕçĕсене çитес кунсенчех вĕçлесе çитерессишĕн кĕрешеççĕ.

В. РЯБЧИКОВ.

Уравăш, Вăрнар р.

Машиновед-стахановец

Сĕнтĕрти машинно-тракторнăй станцин машиновечĕ П. Угольников юлташ пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ авăн çапмалли машинăпа ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕç нормине кашни çул ытлашшипех тултарса пырать. Хăйĕн машинине тирпейлĕ пăхса ĕçленĕ пирки машинăна иртнĕ çулта та ремонт туман, кăçал та ремонт тума кирлĕ мар.

Угольников юлташ кăçал 33 кун хушшинче колхозсенче пилĕк пин центнер ытларах тырă çапрĕ. Хальхи вăхăтра вăл кашни талăкра 170—200 центнер таран çапать. Çапла вăл хăй çине илнĕ обязательствăне ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать.

С. МАМАЕВ.

Обязательствăсене тултарнă колхозсем

ÇĔМĔРЛЕ. Районри нумай колхозсем Аслă Октябрь уявне государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмпех тултарнипе кĕтсе илчĕç. Улкаш ялсоветĕнчи «Подгорное» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем кăçалхи çулшăн государствăна аш-какай, çăмарта, çăм тата пур культурăсем тăрăх та тĕштырă парса татнă.

Кăмашари «Волга» колхоз 1941 çулти аш-какай обязательствине 145 процент, çăм — 113 процент, сĕт-çу— 118 процент тултарнă. Çакăн пек колхозсем районра сахал мар. Районри колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă тăратмалли планă ытлашшипех тултарнă.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшпе Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз малта пырать. Вăл пурĕ 125 центнер купăста, 21 центнер ытларах сухан, 52 центнер ытларах хăяр, 31 центнер кишĕр панă. «Волга» колхоз государствăна сухан тăратмалли обязательствăна виçĕ хут ирттерсе пурнăçланă.

Х. ЛИСИН.



Этемлĕх тăшманĕсем

Испани республики çине Италипе Германин фашистла тискер-хайăкĕсем биксе ӳксен, Испани халăхĕн мухтавлă писателĕ Унамуно фашистсен тискер ĕçĕсене хирĕç Саламанка университетĕнче сăмах тухса калана. Унти çынсем хушшинче пулнă фашистла генерал Астрая: «Интеллигенцине—вилĕм!» тесе хаярран кăшкăрса, писателĕн сăмахне пӳлсе лартнă.

Кун хыççăн нумаях та вăхăт иртмен, фашистсем Испани халăхĕн гениллĕ поэтне Гарсия Лоркăна персе пăрахнă.

Фашистсем хăйсен ирсĕр историйĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах пĕр хура ĕмĕте пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. «Культурăна—вилĕм; чăн-чăн наукăна—вилĕм; чăнлăхпа тĕрĕслĕхе—вилĕм!» — çакă вăл çынçиенсен ылханлă лозунгĕ.

Вĕсем ытти халăхсен деятелĕсене кăна мар, хăйсене вăрă-хурахла ĕçсем тума чăрмантаракан хăйсен халăхĕн тӳрĕ кăмăллă çыннисене те пĕр шелсĕр асаплантарса вĕлереççĕ.

Çапла фашистсем немĕç халăхĕн паллă писателĕсене Эрих Мюзама, Эрнст Толлера, Карл Осецкине асаплантарса вĕлернĕ. Ытти чаплă писательсемпе общественнăй деятельсем—Томас Манн, Генрих Манн, Лион Фейхтвангер, Стефан Цвейг, Бертольд Брехт, Эмиль Людвиг тата ыттисем нумайĕшĕсем фашистла Германирен вăхăтра тарса ĕлкĕрме пултарнипе кăна чĕрĕ тăрса юлнă. Гитлер талккăпĕпе концлагерь тата выльăх вити туса хунă Германирен чи ĕслă та, чи тӳрĕ кăмăллă çынсем тухатуха тараççĕ, тарса ĕлкĕреймеççĕ. Вĕсен вырăнне çак тĕкĕм çĕршывра юнпа ирсĕрлĕх юрăсем юлаççĕ.

Фашистла ирсĕрсем хăйсем тытса илнĕ çĕршывсенче халăхсен чи хаклă та паха памятникĕсене ирсĕрлеççĕ, ишĕлтереççĕ; ĕмĕрсем хушши пухса пынă культура пуянлăхĕсене çаратаççĕ, çунтарса пĕтереççĕ.

Краков хулине пырса кĕрсессĕнех фашистсем Польша халăх поэчĕн — Адам Мицкевичăн памятникне аркатса тăкнă. Кăçал вĕсем Львова пырса кĕнĕ, унта аслă поэтăн татах та чаплăрах памятникне курнă. Мĕнпур пархатарлă та тивлетлĕ япаласене курайман варварсем çав памятнике те ишĕлтернĕ.

Фашистсем Тарас Шевченкон Днепр çыранĕнчи çӳллĕ тăпри çине тупăсем лартса, Украинăн чечекленекен ялĕсем çине вут-çулăм вăркăнтарнă. Фашистсем колхоз клубĕнче çакăнса тăракан Пушкин портретне переççĕ. Вĕсем пире, пирĕн халăха, пирĕн культурăна вилес пек хураймаççĕ. Вĕсем, хăйсен вăйĕсем çитес пулсассăн, пире нимĕн юлмиччен таптаса тăкнă, çунтарса янă пулĕччĕç.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех Украинăри Остер хулинчен Матвеев красноармеец çыру çырнăччĕ. Унта вăл хăй чăвашсен аслă поэчĕн Çеçпĕл Мишшин тăпри çинче пулни çинчен каласа парать. «Коминтерн» колхозри колхозниксем Çеçпĕлĕн вилтăпринче вунтăхăр çул хушши çавтери тăванăн пăхса усранă. Чăваш халăхĕн ывăлĕ—Çеçпĕл украинецсемшĕн хăйсен тăван ывăлĕ пекех хаклă пулнă. Халĕ пирĕн аслă поэтăн тăприне фашистсен юнлă аттисем таптаççĕ. «Коминтерн» колхозăн суртĕрĕсемпе пурлăхĕсене çаратса, çунтарса пĕтернĕ.

Фашистла тискер-кайăк утнăсемĕн çĕр çинче юнлă йĕрсем юлаççĕ. Тăшман хаяр та хĕрхенӳсĕр. Аманнăскер, халь вăл татах та ытларах урса кайса сикет.

Пирĕн аслă тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăх пысăк. Е пурнăç, е вилĕм,—çапла тăрать ыйту.

Пирĕн чăваш халăхĕ, çĕршыври ытти халăхсем пекех, хăйĕн ирĕклĕхĕпе тĕлейне мĕн авалтанах шыранă. Телей хăй тĕллĕн килмен. Унăн халăхăн паттăр ывăлĕсем юн тăкса кĕрешнĕ. Чăваш халăхĕ Разинпа, Пугачевпа пĕрле çĕкленнĕ.

1917 çулти Октябрь кунĕсенче аслă вырăс халăхĕпе пĕрле тăрса помещиксемпе капиталистсен стройне çапса арканă.

Октябрь революцийĕ пире чăн-чăн пурнăç çулĕ уçса панă. Эпир Упа варрисенчи хура пӳртсенчен уçă сывлăша тухрăмăр. Тĕтĕмпе пăчăхса питĕрĕннĕ ӳпкесем уçалчĕç. Пирĕн куç тăрçисем çинчен трахомăн хура каравăш сирĕлчĕ. Вулама, çырма пĕлмен çынсем, эпир, совет власçĕ пулăшнипе хут вĕренсе, хамăр республикăн тĕп законне—Чăваш çĕршывĕн Сталинла Конституцине ылтăн саспаллисемпе çырса хутăмăр. Пирĕн умра пуçламăш шкулсенчен тытăнса университетсем патне çитиччен наука алăкĕ яри уçалчĕ. Пирĕн хамăрăн ученăйсем, инженерсем, врачсем, агрономсем, учительсем ӳссе çитĕнчĕç. Эпир хамăрăн ирĕклĕхпе телейшĕн мĕн кирлине пурне те туса пытăмăр. Ĕлĕк хурлăхлă юрă янранă вырăнта пирĕн çĕнĕ сăвă-юрăсем янăраса кайрĕç. Пирĕн хамăрăн илемлĕ литература, хамăрăн музыка, хамăрăн театр, хамăрăн живопиç çуралса аталанчĕ. Хамăрăн писательсемпе поэтсем, композиторсемпе артистсем, художниксем ӳссе çитĕнчĕç.

Чăваш халăхĕ тĕнче культурин тӳпинелле хăюллăн хăпарма тытăнчĕ. Чăваш халăхĕ тĕнче литературин чи аслă произведенийĕсене—А. С. Пушкин, М. Лермонтов, Гете, Гейне, Байрон, Л. Толстой, М. Горький, В. Маяковский произведенийĕсене куçарса хăй чĕлхипе вулать.

Çаксене пурне те халĕ пирĕн халăхран çынçиен Гитлер туртса илесшĕн; çав ирсĕр пурне те таптаса лӳчĕркессишĕн, пирĕн ирĕклĕхпе чыслăха, пурнăçпа телее фашист пуртти айне хурасшăн.

Тăхлан пуç мимиллĕ, чугун çамкаллă ирсĕр фашист совет çĕрĕ тăрăх шунине пирĕн хашни çын хăй çурăмĕ çинче туйса тăрать. Украинăра вилсе вырнă пĕр мерзавецăн сумкинче йывăр япала тултарнă пĕчĕк хутаç тупнă. Салатса пăхнă та çав хутаçран ылтăнран тата платинăран тунă 120 шăл тухнă. Çав мерзавец çумĕнчех унăн тусĕ—врач Берлинран янă çыру та пулнă. Фашист-врач унта çапла çырнă: «Хаклă Шульц, эсĕ янă посылкăна илтĕм. Тĕлĕнмелле вылăхсем иккен вĕсем украинецсем. Вĕсем ылттăн хакне халиччен те чухласа илеймен пулас. Эсĕ çав шăлсене пурне те хрещенсенчен тупнă тенине манăн ĕненес те килмест. Вĕсен ирсĕр çăварĕсенчен çав паха метала ылтарах тасат»,—тенĕ.

Çак бандит ĕнтĕ фашистсен «врачĕ», «интеллигенчĕ» пулса тăрать. Çавăн пек бандит килсе таптасшăн ĕнтĕ эпир çирĕм тăватă çул хушши мĕнпур вăя хурса çитĕнтерсе пынă телее. Çав бандит пирĕн шăлсене кăна мар, пирĕн пурнăçсене тăпăлтарса илесшĕн.

Урса, пыйтланса, хуртланса кайнă тăпман, хăйĕн çĕршĕннĕ ӳтне бронĕпе витнĕ те малаллах хирĕнсе килесшĕн талпăнать. Çав бронĕленĕ вĕри-çĕленĕн пуçĕ урлă пирĕн аслă çĕршывăн мĕнпур хурçă хăвачĕпе çĕкленсе çапмалла. Пирĕн хурçă хăват хунран-хун вăйлăнрах çĕкленет. Çав хăват вăл çирĕмтăватă çул хушши ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçпа пурăнса курнă халăхсен хăвачĕ.

Эпир хамăрăн ирĕклĕхе этемлĕх тăшманĕсен ирсĕр ылханлă пăмăсшăн, эпир нихăçан та ылханлă фашистсен чурисем пулмастпăр.

Аркадий ЭСХЕЛЬ.

Октяярьти Социализлă Аслă Революци пулни XXIV çул тултарнă ятпа совет халăхне саламлани

ССР Союзĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулни 24 çул тултарнă ятпа çакăн пек саламсем хилнĕ:

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕМ

«Америка интересĕсене хŭтĕлеме чĕререн тăрăшакан кашни çыннăн вырăссем геройла хирĕç тăнине, вĕсем Гитлерăн тĕнчене контроль туса тăмалла тăвас тĕллевне пурнăçа кĕртме памĕ, тесе шанса тăмалла. Кашни кун тенĕ пекех Кăнтăр Америкăн çĕршывĕсенче тата Америкăри Пĕрлешŭллĕ Штатсенче Гитлерăн пропаганда ĕçне тăрă шыв çине кăларни çинчен пĕлтерсе тăраççĕ. Гитлер халĕ турта илнĕ çĕршывсенче те пропагандăн çав меточĕсемпе усă курма пăхать. Россия Англие тата Америкăри Пĕрлешŭллĕ Штатсене пысăк пулăшу парать, çавăнпа вăл ăна пулăшса тăрасса шанса тăма тивĕçлĕ. Вырăссен кĕрешĕвĕ тĕнчене тĕлĕнтерчĕ. Россия Гитлер тĕнчене пăхăнтарса тăмалла тăвассине чăрмантарма пултаракан çĕршыв пулса тăнине кăтартса пачĕ.

СИДЕЙ — Америкăри Пĕрлешŭллĕ Штатсенчи представительсен палатин законсем хатĕрлекен комиссин председательĕ».

* * *

«Совет Союзĕнчи вырăссем тата ытти халăхсем хăйсен тăван çĕршывне тата унăн çĕнĕ стройне ылханлă агрессирен хŭтĕлеççĕ тата вĕсен революцине пула тунă прогреса сыхласа хăварассишĕн кĕрешеççĕ. Çак сăлтава пула Рузвельт Америка ячĕпе Совет Союзне анлă пулăшу пама пулса обязательство пачĕ.

КАРПЕР — Чикагори университетăн профессорĕ».

* * *

«Çак трагикăлла, хăрушă сехетсенче Совет Союзĕнчи халăхсем истори тăваççĕ. Ватăлма пуçланă писатель пулнă пирки эпĕ вĕсене шанчăклăх сăмахĕсем çеç калама пултарнăшăн шеллетĕп. Анчах та пирĕн аслă демократи унран та пысăкраххине ярса парать. Пирĕн халăх ерипен хускалать, анчах вăл халăха шанма пулать. Вăл çар материалĕсем тиесе суднăсем ярать тата юлашкинчен, кирлех пулсан, вĕрентсе хатĕрленĕ çынсене те ярĕ. Гитлеризм—халиччен тĕнче курман чи ирсĕр вăй, кучухнехи наукăн мĕнпур хĕçпăалĕсене хăйĕн аллинче тытса тăнă пирки, çав вăй татах та хăрушрах. Эпир ăна çĕнтерŭ тума ирĕк памалла мар.

Писатель **ЭПТОН СИНКЛЕР**».

* * *

АНГЛИЯ

«Россия паракан чаплă отпор гитлерла Германия поражени тŭсес ĕçре тĕп фактор пулса тăрĕ. Эсир тип çĕр çинче, тинĕсре тата сывлăшра туса пыракан хаяр кĕрешĕве Англи халăхĕ тŭрремĕнех хутшăнасшăн тăрăшать. Российăн социальнăй çĕнтерĕвĕсем, вăрçăн хаяр вучахĕнче испытани витĕр тухнăскерсем, вăрăм вăхăтлăха пыракан мирлĕ пурнăçа çĕнсе илес ĕçре тĕп фактор пулса тăрĕç. Çак мухтавлă задачăна татса панă çĕре эсир хутшăннине Англи халăхĕ тимлĕн сăнаса тăрать. СССР халăхĕсене революци панă этемĕн пысăк тивĕçлĕхĕ хальхи вăхăтра цивилизаци ĕçĕшĕн хаклăран та хаклă духовнăй вклад пулса тăрать. Хĕрлĕ Çар тата Англин тинĕс-çар флочĕ цивилизаци ĕçĕшĕн хаклăран та хаклă материаллă вклад пулса тăрать. Англипе Совет Союзĕ хушшинчи союз, пирĕн салтаксен юнĕпе тата пирĕн граждăнла халăхăн жертвисемпе çирĕпленнĕскер, тĕнчене нацистла йĕрĕнчĕкрен тасатнă хыççăн, вăрçăра пĕлешнĕ çак духовнăй тата материаллă вкладсем уйăрăлса каймалла мар. Вĕсем пире малалла та кирлĕ пулĕç. Çĕнтерŭ урлă эпир мирлĕ пурнăç патне пĕрле пыратпăр.

СИДНЕЙ ЭЛИОТ — «Релианс ньюс» хаçат редакторĕ».

—o—

Германире пассажирсем илсе çŭрессине чакарни

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германири транспортăн ĕçсем ытлашши нумай пирки, ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пассажирсем илсе çŭрессине чакарас тĕлĕшпе влассем панă распоряжени вăя кĕрет. Пассажирсем илсе çŭрессине транспортпа çĕркăмăкĕ, çĕрулми тата хĕрлĕ кăшман турттăрассине вăйлатас шутпа чакарнă.

—o—

Африкăри вăрçă

ЛЮНДОН, ноябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Египет шалти ĕçсен министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 2-мĕшĕнче тул çŭтăласпа противник самолечĕсем Каир районĕ çине вĕçсе пырса тапăннă. Хула çывăхĕнчи вырăнсем çине темиçе бомба пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе çурпсем ишĕлнĕ. Çынсем вилмен.

Çавăн пекех Суэц каналĕн зонинче тата Египетăн ăшă-пĕр провинцийĕсенче сывлăпри тапăну çинчен пĕлтернĕ.

— Ганс, пирĕншĕн çĕнтерŭ çитрĕ пулас?

— Çапла, Фриц, Хĕвелтухăçĕнчи тăмăкран чĕрĕ тухни вăл пысăк çĕнтерŭ.

Г. Ячеистов художник ŭкерчĕкĕ.

Гитлерла вассалсем пĕр-пĕринпе харкашма чарăнмаççĕ

СТАМБУЛ, ноябрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Гитлерла Германин «союзникĕсем» хушшинчи—Венгрипе Румыни хушшинчи харкашу вăйлансах пырать. Бухареста тухса тăракан «Адреалу» хаçат Çурçĕр Трансильванине каялла тавăрса лама кăна мар, тата Венгрин чылай облаçĕсене те «аслă Румыни» çумне пĕрлештерме ыйтать. Урăх сăмахсемпе каласан, румынсем пĕтĕм Венгри территорин çуррине хапсăнма пуçласçĕ. Хаçат çапла çырать: «50 çул хушши Румыни аллинче тăрсанах çав облаçсенчи халăх çĕнĕрен Румыни халăхĕ пулса тăрать».

Çакна хирĕç ответлесе, Венгрири «Пестер Ллойд» хаçат статья пичетлесе кăларнă, унта хаçат çапла палăртать: «Адреалу» хаçат шухăшĕсем «Румынин наци политикин маскине сŭсе пăрахаççĕ тата Румынире венгерсем тĕлĕшпе мĕн тума шухăпланине, Румыния венгерсене румынлантарма тăрăшнине кăтартса параççĕ».

Венгрири фашистсен официозĕ «Гардиста» хаçат Германипе Итали правительствисене Венгрин ревизионистла требованийĕсем ŭссе пыни çине çăвăрăнтарса пăхтарать. «Гардиста» хаçат Венгри шкулĕсем валли кăçал кăларнă тата Венгри цензури ырланă учебниксенчен хăшпĕр сыпăксене илсе кăтартать. Географипе истори учебникĕсенче: Венгрия пĕтĕм Словакине хăйĕн çумне пĕрлештерме ыйтать, тесе ŭççăнах калать.

Итали морякĕсем хушшинче кăмăлсăрлăх ŭсни

ЛОНДОН, ноябрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Италири радио пĕлтернĕ тăрăх, Италипе Ливи хушшинче çŭрекен Итали суднисен экипажĕ малалла нимĕçсенчен тăмалла пулать. Çак факт вăл Итали морякĕсем хушшинче кăмăлсăрлăх ŭссе кайнине пĕлтерет. Мĕншĕн те пулин хăйсем кăмăлсăр пулнине палăртма хăю çитернĕ моряк-итальянецсене гестапо агенчĕсем Италипе Африка хушшинче çŭрекен суднăсем çинчен ĕçрен кăлараççĕ те Италин территориллĕ шывĕсем тăрăх ытла ответлах мар рейссем тăвакан пĕчĕк суднăсем çинче ĕçлеме куçараççĕ.

Австралин Англири представителĕ тунă заявлени

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи правительстви çумĕнче тăракан Австрали представителĕ Пэйдж çапла калана: çар тĕлĕшпе Австралия нихăçан та хальхи пек вăйлă пулман тата вăрçа çĕнтерŭллĕн туса пыма нихăçан та хальхи пек хатĕр пулман. Австралин хĕçпăаллă вăйĕсенче халĕ 450 пин австралиец тăрать; вăрçăнченхи вăхăтпа танлаштарсан, промышленность производстви 20 хут ŭснĕ, Австралин сывлăш-çар вăйĕсен личнăй составĕнче халĕ 60 пин çын шутланать, ку хисеп пĕр чарăнмасăр ŭссе пырать.

Германин подводнăй лодкисемпе кĕрешни

ЛОНДОН, ноябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Англин тинĕс-çар флочĕ, сыранри оборонăн самолечĕсем пулăшнипе, Англин судоходствине хŭтĕлесе тăрать тата тăшманăн подводнăй лодкисене пысăк сиен кŭрет. Подводнăй лодкăсене хирĕç кĕрешнин результачĕсене сайра-хутра кăна пичетлесе кăлараççĕ. Анчах халĕ тинĕс министерстви çакăн çинчен пĕлтерме кирлĕ тесе шутланă: тăшманăн подводнăй лодкисене путарнă май, офицерсемпе матроссене 1.276 çынна, вăл шутра итальянецсене 467 çынна çăлса хăварнă тата вĕсене тытăкана илнĕ. Нимĕçсен хăйсен çитĕнĕвĕсем çинчен сарлакан пĕлтернисем, правило пекех, чăнлăхпа сыхăнса тăмаççĕ. Сăмахран, иртнĕ эрне вĕçĕнче Германин верховнăй командованийĕ Гибралтартан Англие каякан караван составне кĕрекен 47.000 тонна водоизмещенийлĕ 14 суднăна путарни çинчен пĕлтернĕ. Чăннипе илсен 4 судно кăна путарнă, вĕсен водоизмещенийĕ 7.772 тонна пулнă. Çавăн чухне тăшманăн хăйĕн те çухату пулнă. Нумаях пулмасть суднăсен пысăк караванĕсенчен пĕри Атлантика океанĕ урлă каçса Англие çитнĕ, ун çине никам та тапăнман.

Тĕнĕл держависен тинĕс çинчи çухатăвĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрь уйăхĕнче Англин çĕр çинчи тата тинĕс çинчи авиацийĕ Çурçĕр шывĕсенче тата Вăтаçĕр тинĕсре тĕнĕл держависен 101 суднине, октябрь уйăхĕнче 103 суднине путарнă. Противникăн карапĕсене «Харрикейн» текен самолетсем пысăк сиен кŭнĕ. Çав самолетсем çинче 4 тупă тата 12 пулемет вырнаçтарса лартнă пулнă. Юлашки тăватă уйăх хушшинче Англи авиацийĕ тĕнĕл держависен 400 яхăн суднине путарнă тата сиенленĕ.

Югославири партизанла кĕрешŭ

СТАМБУЛ, ноябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Стамбулра пурăнакансем çапла пĕлтереççĕ: Германия ССР Союзĕ çине тапăннăранпа Хорватире усташасене тата Итали оккупанчĕсене хирĕç хăюллăн кĕрешекен патриотсене 700 çынна ытла персе вĕлернĕ. Германи войскисемпе Недич чăсĕсене хирĕç нумай хутчен çапăçусем туса ирттернине тата çар склачĕсем çине тапăннине пула Югослави партизанĕсен çарĕн халĕ йывăр артиллери те пур.

Кунта Сараево çывăхĕнчи вăрмансенче пулса иртнĕ çапăçусем çинчен тĕплĕн пĕлтернине илнĕ. Çав вăрмансенче партизансене хирĕç усташасемпе ретулянăй войскăсен 35 шинлĕ çарĕ тухнă. Германин пикировка тăвакан темиçе самолечĕ партизанла çарсем тăракан вăрман çине бомбăсем пăрахнă. Анчах партизансем йывăр артиллерирен вăйлăн персе тăнă, усташасем вĕсене çĕмĕрсе тăкма пултарайман. Партизансем çĕр çынна яхăн кăна тыткăна лекнĕ, вĕсене сийĕнчех персе пăрахнă. Партизансене халăх ăшă тумтирсем тата продовольстви парса пулăшать.

Тактикăллă занятисенче

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Октябрĕн 26-мĕш. Вырсарникун. Ку кун иртеннех хĕвел пулчĕ. Район центрĕнчи учрежденисемпе предприятисенче ĕçлекенсем — производствăран уйăрăлмасăр обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕренекенсем 10 сехет тĕлне клуб умне пустарăнчĕç.

Боецсем йĕркеленсе тăрсан, отделени командирĕсем ятсене тĕрĕслесе тухрĕç. Вĕсем пур боецсем те çар ĕçне вĕренме килни çинчен вĕренŭ пунктĕн начальникне М. Перлов юлташа рапорт пачĕç. Кун хыççăн взвод тактикăлла занятисене тухрĕ.

Ялтан тухсанах Кĕтне çырми шавласа юхса выртать. Кĕпер урлă каçсан, çур взвод шоссерен сылтăм еннелле, çур взвод—сулахай еннелле, вăрман хĕрнелле çул тытрĕç.

Боецсем часах вăрман кĕррине çитсе тăчĕç. Отделени командирĕсем хăйсен отделенийĕсене уйăрса илсе тактикăллă заняти мĕнле пулса иртмелли çинчен боецсене каласа ăнлантарчĕç.

— Кĕçĕн Çĕрпŭелпе Çĕнĕ Шăхран енчен Крестиковăна çитиччен цепьпе тăсăлса «противник» килет. Сирĕн задача — хăвăра маскировка туса «противник» патне систермесĕр пырса, ăна отпор парса çĕмĕрсе тăкасси, теççĕ командирсем. Вĕсем окоп мĕнле чавмалипе паллаштараççĕ.

Боецсем Кĕтне шывĕн леш еннелле пăхаççĕ. Комсомольски ялĕн аякринче сăрт. Унтан «противник» питĕ аван курăнать. Кĕтнен ку енне те пăртак сăртлăрах, вара айлăм пуçланса каять. Ку тĕлте «противник» боецсене кураймасть. Çакăн пек вырăн шыраса тупрĕç те, боецсем окопсем чавма тытăнчĕç.

Вĕсем пурте пĕр-пĕрин тĕлне пулмалла мар çĕре хăяккăн тăсăла-тăсăла выртнă. Пуçĕсене çĕклемесĕр, чĕркуçийĕсем çине тăмасăр çĕр чакалаççĕ. Боецсем хăйсене вăрçари пек туяççĕ. Командирсем кашни боец патне пырапыра пăхаççĕ, мĕнле ситменлĕхсем пуррине каласа параççĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех Харитонов, Кунин, Агапов, Белобаев боецсем окопсене пур правилăсем тăрăх та тĕрĕс чавса хучĕç. Паллă ан пултăр тесе, хура тăпра çине çерем касса хурса маскировка турĕç. Окопсене лайăх чавакансем татах нумайăн пулчĕç.

Боецсем умне çĕнĕ «боевой задани» тухса тăчĕ. Вăл — савăлланса килекен «противника» Кĕтне шывĕ урлă каçма тарасси. Малта «танксем» килеççĕ. Боецсен задачи: горючи тултарнă бутылкăсемпе персе вут тивертсе ярса «танксене» пĕтересси. Боецсем «горючи» тултарнă бутылкăсемпе персе «танка» «вут тивретсе ячĕç». Ку ĕçре 1-мĕш полувзводри боецсем Ковшов, Харитонов, Вишнев, Перепелкин, 2-мĕш полувзводран Агапов, Синицын, Мустафин, Клапанов, Мархунов, Митюков боецсем лайăх пĕлŭн тĕслĕхĕсене кăтартрĕç. Çапла вара «противника» Кĕтне урлă каçма памарĕç.

Юлашкинчен тăшмана штыкпа чикме вĕренчĕç. Ку тĕлĕшпе боецсем пурте тенĕ пекех тăшмана пĕтерсе тăкма пĕлнине кăтартрĕç.

Заняти хыççăн 3-мĕш отделенин командирĕ Кудрявцев юлташ Агаповпа Синицын боецсене строй умне кăларса, вĕренŭре паха тĕслĕх кăтартнăшăн тата дисциплинăллă пулнăшăн тав турĕ. Перерыв вăхăтĕнче 1-мĕш полувзводри боецсем хăйсем винтовка чаçĕсене мĕнле пĕлнине тĕрĕслерĕç, тепĕр хут вĕренчĕç.

В. ВИКТОРОВ.

Типĕтнĕ пахча-çимĕçсем параççĕ

▲ Иккасси (Шупашкар р.) ялсоветне кĕрекен «Броневик» колхоз членĕсем государствăна типĕтнĕ пахча-çимĕçсем парас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çак кунсенче кăна колхоз 58 килограмм типĕтнĕ çĕрулми леçсе пачĕ.

Пахча-çимĕç типĕтес тĕлĕшпе А. Тимофеева, А. Евграфова, К. Алексеева, А. Иванова колхозницăсем аван ĕçлеççĕ.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Вăл çапăçнă пур вăйĕпе,
«Çĕнтерсе илнĕ» вăл кал-хал:
Вун платье, юбка, виç кĕпе,
Вуникĕ чăх, пĕр кăвакал.

Укерчĕкĕ—Г. Ячеистован, Сăвви—А. Эсхелĕн.

ÇĔНĔ СĔЛЕСКЕР

Сĕлескер ялĕ Ункă шывĕ тăрăмĕнчи улăхра ларать. Пысăк мар вăл. Унта пĕтĕмпе те 80 кил кăна.

Урам хушшинчи лаптра йывăççем яла симĕс сăн кŭреççĕ. Урам тăрăх утнă чухне пысăк вăрманпа пынăн туйăнать.

Сĕлескер ялĕ патша саманинче тавари ытти ялсенчен нимĕнпе те уйăрăлса тăман. Ял çыннисем çурри ытла чухăн пурăннă. Вĕсенчен чылайăшĕ пĕр выльăх чунĕ те усраса курайман. Çырма-çатрасем хĕрринчи ĕмĕрне тислĕк курман анасем çинчен пухса кĕртнĕ тырпул çур хĕле те çитсе пыман. Кĕлетсем пушанса юлсан, пăтавка йăтса пуянсем патне кивçене кайма лекнĕ. Яла Еххим хуçасем тытса тăнă. Вĕсем чухăнсене çĕрĕн-кунĕн чăпта çаптарнă, хăйсем тара илнĕ çĕрсем çинче ĕçлеттернĕ, пĕр сăмахпа каласан, чухăнсен тирне сŭнĕ.

Ялта шкул пулман. Инçетри шкула çŭреме майсăр килмен. Çынсеммĕн пĕчĕкренех чăпта ĕçне тытăннă. Вĕреннĕ çынсем ялта пулманпа пĕрех.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци хыççăнхи çулсем Сĕлескер ялĕн сăн-сăпатне йăлтах улăштарчĕç. Çынсем те çĕнĕрен çуралса ŭснĕ пек çĕнелчĕç. Ялта пуçламĕш шкул пур. Унта Буденный ячĕпе тăракан колхоз ачисем вĕренеççĕ. Ялти çынсенчен нумайăшсем пуçламăш, вăтам тата аслă шкулсенчен вĕренсе тухса тĕрлĕ специалистсем пулчĕç. Ялта халĕ 19 учитель тата ытти нумай тĕрлĕ ответлă вырăнсенче ĕçлекенсем те сахал мар.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз хăйне ĕмĕрлĕхех çирĕплетсе панă çĕр çинчен çулран çул пысăк тухăçлă тырпул илет. Иртнĕ çулта колхоз кашни ĕçкунĕ пуçне 3,5 килограмм тĕштырă, 3 килограмм çĕрулми валеçнĕ. Кăçал ĕçкунĕ пуçне çакăнтан та ытларах тивет.

Колхоз 3 ферма — чăх-чĕп, сурăх тата ĕне фермисем тытать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кунта ытлашшипех тултарнă. Фермăсем колхоза çулран çул ытларах тупăш парса пыраççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансан, Сĕлескер ялĕ хăйĕн нумай ывăлĕсене фронта ăсатрĕ. Пĕр М. Андреев колхозникăн кăна фронта виçĕ ывăлĕ кайнă. Андреев юлташ ывăлĕсене фронта ăсатнă чухне çирĕп наказ панă: — Хаклă ывăлăмсем, пире пурăнма чăрмантаракан тискер тăшмансене пуçĕпех çĕмĕрсе каялла тавăрăнăр! Кĕрешŭре хăюллă та палтăр пулăр! — тенĕ. Сĕлескер ывăлĕсем хăйсен тăван çĕршывĕшĕн, хăйсен вăйлăн ŭссе чечекленнĕ тăван ялĕпе тăван çыннисемшĕн паттăрлăн çапăçаççĕ.

Сĕлескер колхозникĕсем Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă боецĕсене кулленех пулăшса пыраççĕ. Вĕсем кашни уйăхрах оборона фондне пĕрер те икшер ĕçкунĕ параççĕ. Кунсăр пуçне боецсем валли ăшă тумтирсем тума 32 тир, 29 метр пир, 16 килограмм çăм тата алшăш-чăлхасем нумай панă.

Сĕлескер ялĕ — вăл пирĕн аслă тăван çĕршыври çĕршер пин ялсенчен пĕри. Çав ялсем пурте пĕрле пухăнса пирĕн Хĕрлĕ Çарăн ăксĕлми çирĕп тылĕ пулса тăраççĕ.

Октябрьти революцин çĕнтерĕвĕсене çирĕппĕн сыхласа хăварĕç, вĕсем хăйсен ирĕклĕхĕпе тĕлейпе тăшман аллине памĕç.

ГР. ПЕТРОВ.

Кĕрешŭ çулйĕрĕ

1917 çулти Октябрьти революци чăваш халăхне государственность пачĕ, хăйĕн нациллĕ культурине аталантарма май туса пачĕ, çĕре помещиксенчен, хыснапа монастырсен аллинчен туртса илсе хресченсене пачĕ, çавна май чăваш халăхне ССР Союзĕнчи малта пыракан ытти халăхсен шайĕ таран çĕклерĕ. Октябрьти революци вырăсмар халăхсене вунпăр миллион çынсене, çав шутра чăвашсене те, вилсе пĕтессинчен çăлса хăварчĕ, социализмлă çĕнĕ никĕс çинче вĕсене валли çĕнĕ пурнăç туса пачĕ.

Революциччен чăваш çĕршывĕ чи чухăн, чи кая юлнă кĕтес, царизм çаратса пĕтернĕ колони пулнă. Помещиксворянсем, чиновниксем, духовенство нациллĕ тата вырăс буржуазийĕ чăваш халăхне çĕршер çулсем хушши вăрăхурахла çаратса, çавтери тискеррĕн эксплоатацилесе пурăннă. Çав пуçмăрлăха хирĕç чăваш халăхĕ нумай хутчен вăйлă революциллĕ восстанисем туса иртернĕ. Кун пек восстанисенчен чи паллăрахисем çаксем пулаççĕ: 1836 çулта Пăва тата Кăрмăш уезчĕсенче пулнă, чăвашсен лашмансĕн, тутарсен пăлхавĕ, 1842 çулта Етĕрне, Çĕрпŭ, Шупашкар тата Чикме уезчĕсенче пулнă пăлхавсем, 1866 çулта Хĕрлĕ Чутай вулăсĕнче пулнă пăлхав, 1892 çулта Чемей ялĕнчи чăвашсем пăлханни тата 1905—1907 çулсенче пулнă восстанисем; çак восстанисене пурне те царизм çавтери хаярăн пусарнă.

Чăваш çĕршывĕн экономики пит кайăра тăнă. Культура пулманпа пĕрех. Царизм вак халăхсен экономикине вăйлатма, вĕсен культурине аталантарма тăрăшман, вăл: «тĕттĕм халăх умĕнче пуçпулса тăма кăшт та пулсан вĕреннĕ халăх умĕнче пуçпулса тăрассинчен лайăхрах» тесе шутланă.

Патша правительстви вырăсмар халăхсене ирĕксĕрлесе «вырăслатас» политикăна тытса пынă. Çавăнпа вырăсмар халăхсене, вăл шутра чăвашсене те, хăйсен чĕлхипе вĕрентме, хаçат-журналсем пичетлеме чарнă. Чăваш халăхĕ хушшинче ХХ ĕмĕр пуçланнă тĕле хут пĕлекенсем пĕтĕмпе те 17—18 процент çеç пулнă.

Чăвашсен нимĕнле право та пулман. Вĕсене çын вырăнне шутламан. Пĕр буржуалла çыруçă чăвашсем çинчен тŭрех çакăн пек çырнă: «...Вĕсене çынсем тесе шутлама çук. Вĕсен пурнăç йăлийĕ выльăхран та ялăхрах. Вĕсем, чăвашсем, хальхи вăхăтра государствăна усă сахал параççĕ» (Сумароков—«Прогулка по 12 губерниям с историческими и статистическими замечаниями», стр. 218—219).

Чăвашсене выльăх вырăнне хурса шутласси вăл Октябрьти революци пуличченех пынă.

Революциччен чăваш хресченĕсен нумайĕшĕсен (75—80 процент) хăйсен тырри çитсе пыман. Çавăнпа вĕсен кулаксем патне кивçене кайма лекнĕ. Кулак, паллах, пĕр пăт тырăлăн — икĕ пăт, виçĕ пăт ыйтнă, унăн чухăнсене çăвĕпех хăйĕн хуçалăхĕнче ĕçлеттернĕ. Чухăнсене пусмăрлас ĕçре кулаксем халăх хушшинчи тĕрлĕ тĕн сĕрĕмĕпе усă курнă.

Пурнăç условийĕсем япăх пулнипе, пур çĕрте те культурăсăрлăх, тĕттĕмлĕх пуçпулса тăнине пула, чăвашсем хушшинче пурте пекех трахомăпа чирленĕ, туберкулез тата ытти ерекен чирсем сарăлса кайнă. Ыйтăр пурнăçа тата тĕрлĕ чир-чĕре пула, чăваш халăхĕ пит нумай виле-виле пĕтнĕ.

Чăваш хресченĕсен пурнăçĕ калама çук начар пулнă пулсан та, тĕрлĕ кулланайсемпе парăмсем ŭссех пынă, революциччен кашни çын пуçне 13—14 тенкĕ куланай тŭлемелле пулнă. Çакăнпа пĕрлех тата хыснана тŭлемелли парăмсем те ŭссех пынă. 1907—1908 çулсенче кашни хуçалăхăн хыснана 35—40 тенкĕ парăм тŭлемелле пулнă. 1906 çулта Аслă Кăшка (халĕ Октябрьски район) ялĕнчи çĕр обществине кĕрекен чăвашсем çапла çырнă: «...эпир тĕрлĕ парăмсем, налогсем нумай тŭленипе асапланатпăр, вырăна вилетпĕр, мĕншĕн тесен пирĕн хамăра тата семьене тăрантармалăх çĕр çук, пирĕн ачасене вĕрентме шкулсем çук, пирĕн тата çĕре те лайăх ĕçлени çук» («Волжский Вестник», № 44 за 1906 год, «Письмо крестьян-чуваш»).

Çапла вара, чăваш халăхне помещикла-крепостникла государствăн йывăрăшĕ хăйĕн пăхăнтармалли аппаратчĕпе — судпа, чиновниксемпе пусарса тăнă. Халăх чухăнлăх, правасăрлăх, нациллĕ пусмăрлăх айĕнче асапланнă.

1917 çулти февральте пулнă буржуалла-демократиллĕ революци патшана сирпĕтсе антарчĕ, анчах рабочисемпе хресченсене капиталистсемпе помещиксен пусмăрĕнчен хăтарман.

1917 çулти апрельтен пуçласа чăваш халăхĕ хушшинче помещиксен, монастырьсен тата хыснан çĕрĕсене туртса илес ыйту тавра хресченсен аграрлă движенийĕ уйăмăнах вăйлăн сарăлса кайнă. Çак движени массăллă характер йышăннине кура, вăхăтлăх правительствăн губернири представителĕсем, националистла организацисемпе пĕрле хресченсен выступленийĕсене пусарма Шупашкар уездне тата ытти уездсене карательнăй отрядсем янă.

Çав тапхăрта большевиксен Хусанти организацийĕ салтаксемпе рабочисем урлă пысăк ĕç туса пынă. В. И. Ленинăн апрельри тезисĕсене, влаçа рабочисен, салтаксемпе хресченсен депутачĕсен совечĕсен аллине парасси çинчен, помещиксемпе монастырьсен тата хыснан çĕрĕсене конфискацилесе хресченсене парасси çинчен большевиксен апрельри конференцийĕ йышăннă решенисене чăваш хресченĕсем хушшинче те ăнлантарса панă. Çапла вара чăваш хресченĕсем вăхăтлăх правительствăна хирĕç большевикла партин лозунгĕсем айне тăрса кĕрешме кирлине майĕпенех ăнланса пынă. Октябрь революци пулнă самантра чылай уездсенче, сăмахран, Шупашкарта, Етĕрнере ревкомсем организацилеленĕ.

Пролетариллĕ революци çĕнтерŭ туни çинчен калакан хыпара тата пĕтĕм Российăри Советсен II-мĕш съезчĕ В. И. Ленин юлташ докладчĕ тăрăх çĕр çинчен, мир çинчен йышăннă декретсене, ĕçхалăхĕн ирĕк-кăмăлне тата ĕмĕтне палăртса тăраканскерсене, Российăри пур кĕтессенче те хăвăрт пĕлнĕ, 1917 çулти ноябрьте чăвашсем пурăнакан уездсенче пур çĕрте те совет влаçĕ пулса тăнă.

Октябрьти социализмлă революци капитализмлă тата нациллĕ пусмăрлăхăн сăнчăрне татса ывăтрĕ, чăваш халăхне 100.000 гектар ытла çĕр пачĕ, 1,5 миллион тенкĕ тĕрлĕ куланайсемпе налогсем тŭлемелле пулнинчен хăтарчĕ, пур халăхсене те пĕртан право пачĕ. Октябрьти революци хыççăн чăвашсем хăйсен государственноçне—чăвашсен автономлă республикине туянчĕç, хăйсен культурипе искусствине аталантарса пыма тытăнчĕç.

Пролетариллĕ революци пулнăранпа XXIV çул иртнĕ вăхăт хушшинче Чăваш республики чечекленекен республика пулса тăчĕ, колхозниксем-чăвашсем пуян-пурнăç туянчĕç.

Халĕ Чăваш республикинче трахома чирне тĕппипех пĕтересси патне çитерчĕç, халăхăн 98 проценчĕ хут пĕлет, пирĕн республикăра пысăк фабрикăсемпе заводсем ŭссе çитĕнчĕç. Чăваш халăхĕн халĕ хăйĕн тăван çĕршывĕ—Совет Союзĕ пур.

Хальхи вăхăтра пирĕн аслă тăван çĕршыв йывăр вăхăта пурăнса иртteрет. Фашистла сынçиенсем пирĕн çĕре, фабрикăсемпе заводсене тытса илме шутлаççĕ. Вĕсем совет влаçне пĕтерсе, пире нимĕç капиталисчĕсемпе баронĕсен чурисем туса хума шутлаççĕ. Фашистсен тискер ĕмĕчĕ пурнăçа кĕреймĕ.

ССР Союзĕнчи халăхсемпе пĕрле чăваш халăхĕ те 1917 çулти Октябрьте çĕнсе илнĕ аслă çитĕнŭсене шанчăклăн та çирĕппĕн хŭтĕлет.

П. ГРИГОРЬЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5132.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 557. Ф. 6. 52 84 п. л.